

Ытарайми аннемĕрсене саламлатпăр!

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

46(968) №, 2016, ноябрь/чӳк, 26

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.



## Саламлатăп!

*Хаклă хĕрарăмсем!*
*Сире Амăшĕн кунĕ ячĕпе*
*чĕререн саламлатăп!*

Анне – чи çывăх та тăван çын, чи уçă та шанчăклă юлташ тата пирĕн пурнăçри чи хисеплĕ çын.

Çак уяв кунĕнче амăшĕн савăнăçне туйнă, чи лайăх çулĕсене ачисене воспитани пама уйăрнă мĕнпур хĕрарăма тав тăватпăр.

Анне пуласси – йывăр ĕç тата калама çук пысăк яваплăх. Кашни амăшне тăванĕсемпе çывăх çыннисен тĕревĕ, патшалăх пулăшăвĕ кирлĕ.

Çĕршыв ертӳçисем, Чăваш Ен Правительстви пирĕн хĕрарăмсен ыранхи кунпа çыхăннă шанăçне çирĕплетмешкĕн пур енĕпе те пулăшма тăрăшаççĕ. Çакă – социаллă пурнăçпа экономикăна аталантармалли, сывлăх сыхлавĕн тытăмне тата вĕрентĕве çĕнĕ шая çĕклемелли, ача çуратассине хавхалантармалли программăсен тĕллевĕ.

Республикăра ача амăшĕпе ачалăх институтне патшалăх енчен пулăшассине туллин тивĕçтеретпĕр. Кăмăл-сипет никĕсне тата çемьен йăлана кĕнĕ хаклăхне упраса хăварас енĕпе тимлĕх пушшех пысăк, вĕсем обществăпа политика тăнăçлăхĕн никĕсĕ пулса тăраççĕ. Çемье институтне çирĕплетес енĕпе тĕллевлĕн ĕçлетпĕр.

Библири тĕп халалсенчен пĕринче çапла каланă: «Хăвăн аçуна тата аннӳне хисепле». Чăвашсен ваттисен сăмахĕ те пур: «Атте-аннерен хакли никам та çук тĕнчере». Çывăх çынсене юратсан кăна çынлăха упраса хăварма, тĕнчене лайăхлатма пулать. Çемье йăлисене пирĕн ăруран ăрăва куçарса пымалла, хамăрăн аннесемпе аттесен чикĕсĕр юратăвне тивĕç пулмалла, вĕсен пирĕнпе çыхăннă шанăçне тӳрре кăлармалла.

Вĕсем йăх никĕслевçисем, çын аталанăвĕн тĕревĕпе хăвачĕ пулнине кура амăшĕпе ашшĕн ят-сумне çĕклесси – питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç. Шăпах çавăнпа общество организацийĕсен пуçарăвĕсене шута илсе 2017 çула Амăшĕпе Ашшĕн çулталăкĕ тума йышăнтăмăр.

Çак уяв кунĕнче хĕрарăмсене пĕтĕм чунтан çирĕп сывлăх, çемьере ырлăх, чи пысăк ĕмĕтсене пурнăçлама сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**Михаил ИГНАТЬЕВ.**



## Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 26.11 | – 5 | – 3 |
| 27.11 | – 1 | – 6 |
| 28.11 | 0 | – 1 |
| 29.11 | – 5 | – 1 |
| 30.11 | –12 | – 13 |
| 01.12 | – 9 | – 12 |
| 02.12 | –11 | – 11 |

**Юрату çинчен каласçма ан вăтанăр** 2 стр.

**Тĕтĕм тути тутлă-ши?** 3 стр.

**«Анне çумĕнче ачашланса çитĕнмен эпĕ...»** 5 стр.

**Кайăк-кĕшĕкпе выльăх-чĕрлĕхе хĕлле мĕнле пăхмалла?** 8 стр.

**Юттипе йăпанăç шырарăм** 9 стр.

**Ашшĕ вилсен икĕ çултан... ывăлĕ çуралнă** 11 стр.

4 стр.



Марина ТУМАЛАНОВА сăнӳкерчĕкĕ.

# Пăхаттирсен «генералĕ»

«Çулталăк çемйи» республика конкурсне Амăшĕн кунĕ тĕлне пĕтĕмлетесси ырă йăлана çаврăнчĕ. Кăçал 134 çемье мала тухассишĕн вăй виçнĕ. Вĕсенчен 28-ăшне Шупашкара чыслава чĕнсе илнĕ.

«Пуйăсран тухсанах çакăнта килтĕмĕр. Ыйăнни самантрах сирĕлчĕ. Эпир каллех вăйлă, хаваслă, çаврăнăçуллă», – теççĕ Шупашкарти Надеждинсем. Фойерех сăмах пуçартăм вĕсемпе. Çак йыш йăх-несĕлĕн йăли-йĕркине упранăшăн Раççей конкурсĕнче хисепе тивĕçнĕ. Надеждинсен 4 ачи Кремльти елкăра савăнĕ.

Кăçал Патăрьел районĕнчи Чăваш Ишекĕнчи Уткинсем «Çулталăк çемйи» ят çĕнсе илчĕç. Анатолий Арсентьевичпа Каролина Анатольевна 9 арçын ачана çемьене йышăннă – хăйсен 3 тĕпренчĕкĕ пурнăçăн аслă çулĕ çине тăнă ĕнтĕ. Мăшăр 32 çул пĕрле пурăнать. Уткинсем республика Пуçлăхĕн Тав хутне, «Юратушăн тата шанчăклăхшăн» медале тивĕçнĕ.

Чăнах, пăхаттирсен хушшинче пурăнать Каролина Анатольевна. Çемьере йĕрке тума пултарнăшăн хăйне генералпа танлаштарать.

ÇЫРĂНТАРУ – 2017

«ХЫПАРА» – КАШНИ ÇЕМЬЕНЕ

**2017 çулăн I çурринче илсе тăмашкăн**

*декабрь уйăхĕн 26-мĕшĕччен*

**"ХЫПАРА" – 572,88 тенкĕпе,**
**"ХЫПАР-эрнекуна" – 279,36 тенкĕпе,**
**"ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ" хаçата**
**297,24 тенкĕпе çырăнтараççĕ**

# Юратни çинчен кашни кун калăр...



**Вăрçă вăхăтĕнче кунта эвакогоспиталь ĕçленĕ. Аманнă вырăс салтакĕ, çывăхра çынсем ют чĕлхепе калаçнине илтсен, хăй нимĕçсем патне тыткăна лекнĕ тесе шухăшланă. Аманнисене пулăшма чăваш хĕрарăмĕсем пынине, паллах, салтак тĕшмĕртместе пултарайман. Çак историе вăрçă вăхăтĕнче госпитале ĕçлеме çӳренĕ Çĕрпӳ хĕрарăмĕ каласа кăтартнă. Республикăри хĕрарăмсен союзĕ Амăшĕн кунне çак районта паллă тунă май уяв мероприятийĕсене хăнасене хулапа паллаштарнинчен пуçлама тĕв тунă вырăнти хастарсем. Шăпах хулари паллă вырăнсене кăтартса çӳренĕ май каласа кăтартрĕç те çак истори çинчен хĕрарăмсене.**



Çĕрпӳ историйĕ пуян. Унпа тĕплĕн паллашас тесен яра кун çӳрес пулать хула тăрăх. Темиçе ĕмĕр каялла çĕкленĕ çуртсемпе юнашарах çĕнĕ палăксем те пур кунта. Çавăн пекех Çĕрпӳсен мăнаçлăхĕ, паллах, хĕрарăмсен Тихвин мăнастирĕ. Ун çумĕнчи Вырсарни шкулĕн ачисен пултарулăхĕ те тыткăнларĕ пухăннисене.

Унтан уявăн тĕп тĕллевне пурнăçламашкăн – Амăшне чысламашкăн – хăнасем те, куракан та районти культура çуртне пуçтарăнчĕç. Тĕп вăрттăнлăха уçма васкамарĕç-ха уяв йĕркелӳçисем. Йăлана кĕнĕ тăрăх, Чăваш республикинчи хĕрарăмсен союзĕ çулсерен чи лайăх ĕçлекен уйрăма палăртать.

Пуçламăшсен пуçламăшне – Амăшне – халалланă уява район пуçлăхĕ Татьяна Баранова уçрĕ. Хĕрарăмăн пурнăçри пĕлтерĕшĕ пирки сăмах пуçарчĕ вăл. Хĕрарăм çумĕнче арçын та ăнăçуллă, хĕрарăм пулсан тĕнче те ырăрах та, илемлĕрех те. Унăн тĕп тĕллевĕ – амăшлăх. Çавăнпа çак должноçе патшалăх шайне çĕклемеллине палăртрĕ Татьяна Владимировна.

Район администраци пуçлăхĕ Александр Казаков пухăннисене уяпа саламланă май хĕрарăмпа арçынна пĕр танлăн утма, пĕр çăвартан пурăнма сунчĕ.

Чăваш республикинчи хĕрарăмсен союзĕн ертӳçи Ольга Зайцева пĕрлĕх ĕç-хĕлĕпе паллаштарнă май Çĕрпӳсен хастарлăхне уйрăммăн палăртмасăр иртмерĕ. Калăпăр, "Амăшĕнчен хĕрне" /халĕ ун çумне "ашшĕнчен – ывăлне" сыпăк хушăннă/, "Эпир – сывă йăла-йĕркешĕн" проектсем шăпах çак районта пуçланнă. "Эсĕ кирлĕ пире, тусăм" проекта та Çĕрпӳсем хастар хутшăнаççĕ.

Ыркăмăллăх фончĕн ертӳçи Лариса Игнатьева тăван çĕршыв та, çĕр те анне сăмахпа çыхăннине аса илтерчĕ. Пухăннисене ырлăх, тăнăçлăх сунчĕ – ĕçре те, килте те.

Юлашки çулсенче Ашшĕсен канашĕ курăмлă ĕçсемпе палăрать. Унăн ертӳçи Владимир Викторов ытларах арçынсемпе калаçу пуçарнăн туйăнчĕ. "Мăшăрăрсене юратни çинчен кашни кун калăр, çемьене телей кăна кӳрĕ ку – шăпах вĕсем республика аталанăвне тӳпе хываççĕ те", – терĕ вăл. Республикăра арăмĕпе упăшки уйрăласси чакнине палăртрĕ Владимир Николаевич. Ку енĕпе республика Атăлçи округĕнче – чи кайри. Çакăнта халăхăн ламран-лама куçакан йăли-йĕркин витĕмĕ пурах.

Олимп чемпионки Елена Николаева кашни хĕрарăмах амăшлăх туйăмĕпе савăнса курма ырă сунчĕ.

Чи пăлханулла самант çитрĕ – кăçал хĕрарăмсен сюзĕн уйрăмĕсенчен хăшĕ палăрнă-ха хастарлăхпа? Ольга Юрьевна сцена çине тухсан зал тăвăллăн алă çупрĕ: "Паллах, Çĕрпӳсем!" Хастаррисенчен те хастаррисене, пултаруллисенчен те пултаруллисене Тав хучĕсемпе, Ĕç çыннин паллипе, сумлă парнесемпе чысларĕç. Уява амăшне халалланă сăвă-юрă илем кӳчĕ.

**Рита АРТИ.**

Автор сăнӳкерчĕкĕсем.





## САЛТАК АМĂШĔСЕМ

# Вĕсем çĕршыв хӳтĕлевçисене çитĕнтернĕ

Республикăри Салтак амăшĕсен комитечĕн ертӳçи Лариса Егорова уява пысăк йышпа паллă тума хăнăхнине вулакансем пĕлеççĕ. Ку хутĕнче те Амăшĕн кунĕ тĕлне хĕрарăмсене Шупашкарти строительство тата хула хуçалăхĕн техникумĕнче пуçтарчĕ вăл. Салтак амăшĕсен каçне республикăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен хăнасем килсе çитрĕç. Вăрмар районĕнчи Уйкасри Ангелина Ивановăпа урамрах паллашма ĕлкĕртĕмĕр. Унăн ывăлĕ Игорь Сергеевич 2002 çулта Ингушетире пуç хунă. Чун панă тĕпренчĕкне аса илсе тăварлă куççульне шăлса илчĕ Ангелина Васильевна. Виçĕ ывăлăн хӳттинче пурăнма пӳрмен ăна. Иккĕшĕ çут тĕнчерен вăхăтсăр уйрăлса кайнă. Пĕри çемйипе Мускавра пурăнать. Халĕ куç тулли мăнукĕпе йăпанса пурăнать хĕрарăм.

«Салтак амăшне тимлĕх уйăрни тата хисеп туни кăна кирлĕ. Вĕсем çĕршыв хӳтĕлевçисене çитĕнтернĕ», – терĕ Лариса Ивановна сцена çине хăпарсан.

«Ывăлăн юлташĕсемпе тĕл пулатăп. Халĕ вĕсем 50-ра. Пурăннă пулсан манăн ача та çак ӳсĕме çитетчĕ, хальччен çӳçĕ те шуралатчĕ пуль», – чунне уçать Раççей Геройĕн Игорь Петриковăн амăшĕ Анна Егоровна.

Çакăнта пуçтарăннă хĕрарăмсем ывăлĕсен паттăрлăхĕ çинчен каласа кăтартрĕç. «Салтака пытарнăранпа 16 çул иртрĕ, эпир çаплипех унăн вилтăприйĕ çинче упаленсе макăратпăр», – сăмах илчĕ Николай Куракован амăшĕ.

«Эпир хамăр ывăлсене çартан кĕтсе илеймерĕмĕр. Вăрçă çинчен калаççанах чун тăвăнса килет. Тĕнчере тăнăçлăх хуçалантăрччĕ. Хĕсметрен пăрăнса юлмалла мар, тăван çĕршыва сыхламалла. Сирĕн киле чĕрĕ-сывă таврăнмалла пултăр», – пил пачĕç студентсене салтак амăшĕсем.

Уяв тĕлне пулас строительсем пысăк концерт хатĕрленĕ. Юрă-ташăпа хĕрарăмсен кăмăлне тупрĕç вĕсем.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

## СПОРТ

# Ентеш те ăмăртать

Чăваш биатлон шкулĕн воспитанникĕ Татьяна Акимова Раççей пĕрлештернĕ команди йышĕнче тĕнче Кубокне хутшăнать. Ăмăрту чӳк уйăхĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа раштав уйăхĕн 4-мĕшĕччен Швецири Эстерсунд хулинче иртĕ.

Раççей команди йышĕнче ентешпе пĕрле Светлана Слепцова, Виктория Сливко тата Ольга Подчуфарова ăмăртĕç. Биатлонистсен союзĕ малтанласа палăртнă тăрăх, Акимовăпа Слепцова хутăш эстафетăра старта тухĕç. Вăл ăмăртун пĕрремĕш кунĕнчех Мускав вăхăчĕпе 17.30 сехетре иртĕ.

**Татьяна НАУМОВА.**

ФОРУМ

# Пахалăх сывлăха витĕм кӳрет

**Чăваш Енре регионсен «Ăнăçлă бизнес стратегийĕпе практики» форумĕ 12-мĕш хут иртрĕ. Ăна Пĕтĕм тĕнчери пахалăх кунне тата Европăри пахалăх эрнине халалларĕç. Унта 200 ытла çын – республикăри бизнесменсем, Мускавран, Чулхуларан, Самартан, Красноярскран килнĕ экспертсем, промышленноç предприятийĕсен ертӳçисем, аслă вĕренӳ заведенийĕсен представителĕсем – хутшăнчĕç.**




Çичĕ тематика лапамĕнче калаçу бизнеса аталантармалли çул-йĕр тавра, сиксе тухакан йывăрлăхсене мĕнле çĕнтермелли çинчен пычĕ. Форума ЧР Суту-илӳпе промышленноç палатин президенчĕ **Игорь Кустарин** уçрĕ. Вăл палăртнă тăрăх – продукци пахалăхĕпе хăрушсăрлăхĕ паян пурне те кăсăклантарать, мĕншĕн тесен вĕсем тӳрремĕнех çын сывлăхĕпе çыхăннă.

Пленарлă ларăва ЧР Пуçлăхĕ **Михаил Игнатьев** хутшăнчĕ. Бизнес валли республикăра яланах çул уçă пулнине палăртрĕ. Кăçал промышленноç производствин индексĕ 108% танлашнă. Чăваш Енри чылай предприятипе организаци экономикăри кăткăс лару-тăрăва тата санкцисене пăхмасăрах ăнăçлă аталанать. Регионти промышленноç комплексĕн предприятийĕсен тиесе янă продукци калăпăшĕ ӳсет. Тĕнчери стандарта тивĕçекен менеджмент пахалăх тытăмĕн сертификатне илекен организацисем те йышлансах пыраççĕ. Оборона промышленноçĕ те уксахламасть. Ку енĕпе 1 миллиард тенкĕ хушма саккас илнĕ. Чăваш Енри предприятисем инноваци технологийĕсене пурнăça кĕртессипе Раççейре – малтисен ретĕнче.

Республика ертӳлĕхĕ Шупашкарти трактор заводĕнчи йывăр лару-тăруран тухмалли çул-йĕр шырать. Çуллен 50 миллиардл тенкĕлĕх тавар кăларнăскер паян 7 пин çынна ĕççĕр тăратса хăварнă.

Экономика кал-кал аталанса пырсан социаллă ыйтусене татса пама та çăмăлрах. Халĕ республика, федераци программисемпе килĕшӳллĕн 4 ача сачĕ тăваççĕ. Çывăх вăхăтра республикăн тĕрлĕ районĕнче, хулинче 32 шкул хута ямалла. Паянхи куна тивĕçтерекен, тĕнче шайĕнчи оборудовани вырнаçтарнă больницăсем те кашни çулах уçăлаççĕ. Чăваш Енре 100 çул урлă каçнă 98 çын пурăнать. Медицина пулăшăвĕ парасси лайăххланса пынăçемĕн вĕсен йышĕ тата та хушăнас шанăç пур.

Форумăн пленарлă пайĕнче "Чăваш Республикин пахалăх марки", "Раççейри чи лайăх 100 тавар" конкурссен лауреачĕсене чысларĕç.

**Хамăр инф.**

ФЕСТИВАЛЬ

# Кĕвĕ уявĕ

**Чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнче Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче М.Д.Михайлов ячĕллĕ Пĕтĕм тĕнчери опера фестивалĕ уçăлчĕ.**

Вăл çирĕм улттăмĕш хут иртет. Çак кунсенче Э.Сапаев ячĕллĕ Мари патшалăх оперăпа балет театрĕ Сергей Прокофьевăн «Любовь к трем апельсинам», Чулхулари А.Пушкин ячĕллĕ оперăпа балет театрĕ Эдуард Фертельмейстерăн «Коко Шанель: страницы жизни», П.Чайковский ячĕллĕ Удмурт патшалăх оперăпа балет театрĕ Джамака Пуччинин «Турандот» спектаклĕсене кăтартĕç. «Отелло», «Кармен» оперăсене те хамăр артистсемпе пĕрлех хăнасем илем кӳрĕç. Фестиваль раштав уйăхĕн 4-мĕшĕнче Гала-концертпа вĕçленĕ.

Театрăн пултарулăх ертӳçи тата тĕп режиссерĕ Ольга Нестерова каланă тăрăх – уява 600 ытла артист хутшăнĕ. Тĕнчипе чап çĕнсе илнĕ артистсен пултарулăхĕпе киленмешкĕн фестивале çитсе курăр!

**Мария РОМАНСКАЯ.**

КОНКУРС

# Хула текех кĕл айне пулмĕ

**Хула йĕркеленнĕренпе Шупашкарта тĕрлĕ сăлтава пула пушар час-часах алхаснă. Малтанах çынсем «хĕрлĕ автанпа» хăйсем çеç кĕрешнĕ, инкек тухнине чан çапса пĕлтерсен витре йăтса чупнă. Шурă Шупашкарăмăр никĕсленнĕренпе икĕ хутчен: 1659 тата 1773 çулта – тĕппипех кĕлленнĕ. Иккĕмĕш хутĕнче вут-кăвар 717 çуртa, 29 чиркĕве, 14 завода, 28 лавккана, Атăл хĕрринчи çăкăр-тавар тултарнă темиçе карапа тĕп тунă. Хула кĕл айне пулнă...**

Пушар хăрушсăрлăхĕн организацийĕ çинчен хулара пĕрремĕш хутчен 1806 çулта калаçма пуçланă. Çав çулах хулана талăкĕпех сыхлакан пушар обозĕ туса хунă. Ку пушар хăрушсăрлăхĕн пĕрремĕш подразделенийĕ пулса тăнă. Унтанпа нумай çул иртнĕ. Паян çăлавçăсем пач урăх условисенче ĕçлеççĕ. Историе, утăм хыççăн утăм, Шупашкарти Пушар хуралĕн музейĕнче питех те тĕплĕ пĕлме пулать.

Ĕнер журналистсене МЧС тытăмĕнче ĕçлекенсем шăпах унта йыхравларĕç те. МИХ ĕçченĕсем валли хăйне евĕр уяв йĕркелерĕç. Мероприяти программи анлă пулнине те палăртмалла: республикăри пушар хуралĕн историйĕпе паллашнисĕр пуçне пухăннисене «хĕрлĕ автана» сӳнтермелли пĕрремĕш хатĕрсем çинчен аса илтерчĕç, вĕрен çыхма вĕрентрĕç. Огнетушительпе ĕçлесе пăхма та май туса пачĕç. Ахальтен мар: чылай çын ĕçре инкек сиксе тухас тăк пушар сӳнтермелли хатĕрпе епле усă курмаллине те пĕлмест-мĕн. Журналистсем хăвatлă сăмахра ĕçлеме пĕлнисĕр пуçне çулăм сӳнтерме пултарнине те кăтартрĕç.

Чи кăмăлли – журналистсен хушшинче пултаруллисене палăртрĕç. Раççей МЧСĕн Чăваш Енри тĕп управленийĕ республикăри журналистсен хушшинче «Кăварлă перо» /«Огненное перо»/ конкурса çуллен ирттерет. Кăçал ăна МЧС тытăмĕнче пушар хуралĕн çулталăкне ирттернине халалланă. Калем ăстисен конкурсĕ пĕтĕм Раççейри «Созвездие мужества» фестивалĕн пĕр пайĕ тесен те йăнăш мар.

Журналистсене «Телекурав», «Радио», «Республикăри пичет кăларăмĕ», «Районти пичет кăларăмĕ» тата «Сăнӳкерчĕк» номинацире чысларĕç. Конкурсра «Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсем те палăрчĕç. «Республикăри пичет кăларăмĕ» номинацире пĕрремĕш вырăна «Хыпар» хаçат корреспонденчĕ Ирина Клементьева тухрĕ. Виççĕмĕш вырăна «Чăваш хĕрарăмĕн» корреспонденчĕ Татьяна Наумова йышăнма пултарчĕ. «Хыпар» ИÇ фотокорреспонденчĕ Сергей Журавлева пушар хăрушсăрлăхне пропагандăлама пулăшăншăн Тав хучĕпе чысларĕç.

**Татьяна НАУМОВА.**

СĂМАХ ПАРĂР-ХА

# Тĕтĕмĕ тутлă-ши?

**Марина ТУМАЛАНОВА**

**Амăшĕ хăйĕн ачине телей курма çуратать. Килтен пил парса кăларса ярать, уншăн кĕлĕ тăвать. Пур хĕрарăм та тĕпренчĕкне хитре тумлантарма, унăн тавракурăмне аталантарма тăрăшать. Йăлтах – ачи-пăчишĕн! Декрет отпускĕнче кăна кашни кун пĕр евĕрлĕрех иртнĕрен ĕçе тухассăн та туйăнмасть. Кайран ача сачĕпе сывпуллашма вăхăт çитет. Унтан амăшĕ ывăл-хĕрĕпе пĕрле шкул алăкне уçса кĕрет. Халь кăна алăран çавăтăнса çӳрекенскерсем хăвăртах хăй тĕллĕнлĕхе хăнăхаççĕ. Хăшнепĕрне, тен, çывăх çыннисем пăхса-тĕрĕслесе тăни те килĕшмĕ. «4-мĕш класра вĕренекен ывăлăн социаллă сайтĕнчи страницине хăйĕнчен ирĕк ыйтсах уçса пăхрăм. Унта тантăшĕсемпе юрату тавра сăмах пуçарнă. Хăшĕ кама килĕштернине уççăнах палăртаççĕ. Эпĕ ачана лайăххах вĕрентес тесе репетитор тытатăп. Ăна урок-сенчен ытла юрату кăсăклантарать иккен», – кăмăлсăр калаçать юлташăм. Çук, ӳпкелешмест вăл. Юрату авăрне лексе вĕренесси пирки манасран кăна çапла калать.**

**Амăшĕ курман чухне тем хăтланаççĕ ачасем? Çапах ывăл-хĕре никам та усал ĕç тума кăларса ямасть килтен. Ачи-пăчи сывă та сывлăхлă пурăнни – çывăх çыннисемшĕн чи пысăк савăнăç.**

**Çав вăхăтрах хăй тĕллĕнлĕхе хăнăхнисене илĕртекен япала сахал-и çĕр çинче? Эрех, пирус, наркотик организма усал витĕм кӳнине пурте пĕлеççĕ. Юлашки вăхăтра кальян сиенĕ çинчен нумай калаçма пуçларăмăр. Сывлăх сыхлавçисем, общество организацийĕн хастарĕсем Шупашкарти кафе-барти лару-тăрăва тĕрĕслени пирки хамăр хаçатрах çырнăччĕ. Тĕтĕм яваннăран кăмăл пăтранни, унсăр пуçне тĕрлĕ чир-чĕр аталанни тавра вăрах калаçрĕç ун чухне.**

**Хăй вăхăтĕнче амăшĕ пĕтĕм ĕçе пăрахса тĕпренчĕкне бассейна, спортзала илсе çӳрет. Унпа уçăлма тухать, ăна велосипед илсе парать. Сывлăха хавшатма вара нумай та кирлĕ мар иккен.**

**Атăл хĕрринче канакансем кальян кăларса лартни тĕлĕнтернĕччĕ мана. Шывран тухаççĕ те – тӳрех ун патне пуçтарăнаççĕ. Пĕр тĕлте кăна мар, темиçе çĕрте – çакнашкал ӳкерчĕк. Ахăртнех, пĕри тепринчен юласшăн мар.**

**Социаллă сетьре те кальян ытамлакансен сăнӳкерчĕкĕсем тӳрех куçа тăрăнаççĕ. Ав мĕнешкел япала туяннă вĕсем. Çĕнĕ хатĕр, паллах, тĕрлĕ ӳсĕмри çынсене илĕртет. Мĕн тути-ши унăн тĕтĕмĕ?**

**2014 çулта общество вырăнĕсенче пирус туртма чаракан саккун вăя кĕчĕ. Йĕркене пăсакансене штраф тӳлеттереççĕ. Анчах халĕ апат çитерекен вырăнсенче табак хутăшĕпе усă курман кальян вырнаçтараççĕ. Çакна саккун хирĕçлемест.**

**Çакăнта çӳрекенсем хăйсен сывлăхне упрамаççĕ, унсăр пуçне тĕтĕме пула ыттисем шар кураççĕ. Ахальтен мар пурăнмалли çуртри кальян вырăнĕсене пула çынсем канăç сухатнă. Хваттере кĕрекен тĕтĕм йăлăхтарса çитернĕ вĕсене. Çавăнпах çынсем влаç органĕсенчен пулăшу ыйтаççĕ. Сăмахран, Шупашкарти Ленинград урамĕнчи 14-мĕш çуртра тĕпленнисем «Клумба» кальяннăйра йĕрке тума ыйтса çырнă. Тĕрĕслев çакăнта санитари нормине пăхăнманнине палăртнă. Вентиляци тытăмĕ юрăхсăра тухнă, çавăнпа тĕтĕм хваттер хуçисене чыхăнтарнă. Ку ĕçе суд пăхса тухнă, çак вырăна 70 талăклăха хупнă.**

**Гладков урамĕнчи 28-мĕш çуртра пурăнакансем те кăмăлсăр. «FiFa» кальяннăй-кафери лару-тăрăва тĕрĕслеме ыйтнă вĕсем. Унта вентиляци тытăмне тĕрĕс мар вырнаçтарни çирĕпленнĕ. Ку кафене 60 талăклăха ĕçлеме чарнă.**

**Кальян туртакан вырăнсенче "табака хирĕç" саккуна пăснă тĕслĕхсене те тупса палăртнă. Республикăри Йĕпреç районĕнчи прокуратура ĕçченĕсем "Империя" барта табак хутăшĕллĕ кальян сĕннине курнă. Çавна май хăй тĕллĕн ĕçлекен предпринимателе администрацилă майпа явап тыттарма йышăннă.**

**Шупашкарти "Неон" клубра çул çитмен çамрăка табак хутăшĕллĕ кальян турттарнă. Çакăншăн клуб хуçин штраф тӳлеме лекĕ.**

**Йĕрке хуралçисем общество апатланăвĕн вырăнĕсенче кальян тĕлĕшĕпе саккун йĕркине пăхăнма ыйтаççĕ. Унăн тĕтĕмĕ организма ырă витĕм кӳменни паллă. Сывлăхлă пурăннине, чăнах, нимĕн те çитмест.**




# Пепке çемье хӳттинче çитĕнтĕр

**2017 çул республикăра – Амăшĕпе Ашшĕн çулталăкĕ. Çакă Чăваш Ен Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн Указĕнчен паллă. Вăл каланă тăрăх – çак шухăша республикăри Хĕрарăмсен союзĕ тата унăн çумĕнче йĕркеленнĕ Ашшĕсен канашĕ сĕннĕ. Амăшĕпе Ашшĕн çулталăкне халалланă мероприятисем çемьене хаклама вĕрентĕç.**

Республикăри Ашшĕсен канашĕн ертӳçи Владимир Викторов сĕнĕве ырланăшăн Михаил Васильевича тав тунă май общество аталанăвĕ çемьери хутшăнусемпе çыхăннине палăртнă. Çирĕп çемье пулсан республика та, патшалăх та вăйлăрах.

Хĕрарăмсен союзĕн ертӳçи Ольга Зайцева лайăх арăм, упăшка, амăшĕ, ашшĕ пулма вĕренмелли çинчен каланă. «Ачан амăшĕпе ашшĕ пулсан кăна çемье – çирĕп. Пирĕн проектсем те çак чăнлăха çирĕплетеççĕ. Çавнашкал çемьере йăла-йĕркене пăхăнаççĕ, сывлăхлă ачасем çитĕнеççĕ, йăх-несĕле асра тытаççĕ», – тенĕ вăл.

**Мария РОМАНСКАЯ.**



## Хăнара – асамçă

**Нумаях пулмасть Шупашкарти çул çитменнисен социаллă реабилитаци центрне «Пурнăç çулĕ» ыркăмăллăх фончĕн ĕçченĕсем чăн-чăн асамçа хăнана илсе пычĕç.**

Супăнь хăмпин вылявĕ – ачасемшĕн хăйне евĕр асам. Ăна мĕнпур ӳсĕмрисем куç хупмасăр сăнаççĕ. Пушшех те, центрти ачасемшĕн кунашкал савăнăç час-часах пулмасть. Александра Рич хĕрачасемпе арçын ачасене пурне те телей кӳме пултарчĕ. Кашнинех тимлĕх уйăрчĕ вăл: супăнь хăмпипе выляма, вĕсен «хуçи» пулма ирĕк пачĕ. Çавна май ачасемпе çамрăксем айккинчен пăхма çĕмĕл ĕçĕн те хăйĕн ывăрлăхĕсем пуррине ăнланчĕç. Супăнь хăмпипе выляма та вĕренмелле иккен, кунта та тăрăшулăхпа пĕлӳ, тимлĕх кирлĕ. Чи кирли вара – ĕмĕтленме пĕлмелле. Шăпах çакăн пирки Александра ачасене каласа кăтартрĕ те.

Телейпе çиçекен куçлă ачасем хăйсене савăнăç парнеленĕскере нумайччен ярасшăн пулмарĕç, ăна тĕрлĕ ыйту пачĕç.

Реабилитаци центрĕн ĕçченĕсем хăйсен воспитанникĕсене тимлĕх уйăракансене чунран тав тăваççĕ.

**Анастасия АЛЕКСЕЕВА.**

# Пăхаттирсен «генералĕ»

**(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).**

«Пирĕн килте ĕç малти вырăнта. Утă кĕртмелле-и, çум çумламалла-и – хамăр пĕр бригада. Ачасем хăйсен яваплăхне туяççĕ, итлеççĕ. Килте дежурство йĕркелетпĕр. Вĕсем пӳртре те тирпейлеççĕ, апат та пĕçереççĕ, вылăх та пăхаççĕ. Аслисем кĕçĕннисене куçран вĕçертмеççĕ», – каласа кăтартать 12 ача амăшĕ. Вырăс чĕлхипе литература вĕрентекенĕ Каролина Анатольевна 52 çул тултарсан автомашинăпа çӳремешкĕн документ илнĕ. Руль умне ларни вăхăта перкетлеме пулăшать ăна.

Уткинсен килĕнче гаражри пекех темĕн тĕрлĕ транспорт пур. Çакă вĕсен пурнăçне çăмăллатать. Ашшĕ ывăлĕсене машина юсама хăнăхтарать. Юр çусан çемйипех йĕлтĕр сырса тухаççĕ вĕсем, пĕр-пĕринпе ăмăртмалла ярăнаççĕ.

«Ачасене пурнăçра хăйсен çулне тупма пулăшасчĕ. Вĕсем телейлине курасчĕ», – теççĕ Анатолий Арсентьевичпа Каролина Анатольевна.

«Социаллă чи яваплă çемье» номинацире Çĕмĕрле районĕнчи Кузьминсем мала тухрĕç. Елчĕк районĕнчи Шамалакри Львовсем – чи ĕçчен çемье. Нумаях пулмасть вĕсемпе хамăр хаçатра паллаштарнăччĕ. Спортпа туслисенчен Шупашкар районĕнчи Çĕнĕ Тутаркассинчи Архиповсене палăртрĕç. Пултарулăх енĕпе Çĕнĕ Шупашкарти Кузнецовсене çитекен пулмарĕ. Вĕсем чуна тыткăнлакан юрă та хатĕрленĕ. «Чи туслă çемье» номинацире Шупашкарти Тихоновсем çĕнтерчĕç.

Уява пуçтарăннисене Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин, Патшалăх Канашĕн Председателĕ Валерий Филимонов тата ЧР Патшалăх Канашĕн Социаллă ыйтусемпе ĕçлекен комитет председателĕ Вячеслав Рафинов, республикăри Хĕрарăмсен союзĕн ертӳçи Ольга Зайцева, Ашшĕсен канашĕн пуçлăхĕ Владимир Викторов тата ыттисем саламларĕç, çемье ăшшине упрама сунчĕç.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

***АЧАСЕН ПУЛТАРУЛĂХĔ***

# Мĕн тери аван вăл – тăван кил пурри

**«Атте-анне килĕ – пуçламăшсен пуçламăшĕ, пурнăçăмри шанчăклă причал. Атте-анне килĕ, ăшă çутă чӳречӳсенче нумай çул ан сӳнтĕрччĕ...» Çак юрă сăмахĕсене эпĕ кунне темиçе хутчен те илтетĕп. Пирĕн килте асанне телефонĕ шăнкăртатмассерен янăрать вăл. Анчах эпĕ унăн пĕлтерĕшне нихăçан та ăша хывман. Акă паян «Мĕн тери аван вăл – кил пурри» темăпа сочинени çырма лартăм та шухăша путрăм. Чăнах та, мĕн тери аван иккен вăл – кил пурри.**

Телекурав хыпарĕсенче Сирипе Украинăри пĕр айăпсăр çынсен çурчĕсем ишĕлни пирки час-часах илтетпĕр. Вĕсен ăçта пурăнмалла-ха? Юрать-ха инкеке лекнисене пулăшаççĕ.

Эпĕ хамăн çуралнă тăрăха – Канаш районĕнчи Шаккăл ялне – питĕ юрататăп. Пирĕн çурт ял хĕрринче ларать. Кунта мĕн тери илемлине курасчĕ сирĕн! Çуртран темиçе метрта çăлкуç тапса тăрать. Унта тăп-тăрă та тутлă шыв юхать. Çулла эпир ун патне час-часах анатпăр. Турă Амăшĕ тĕне кĕнĕ кун асанне тантăшĕсемпе унта шыв ăсма каять. Ун чухне çăл патне ялти ытти çын та нумайăн пухăнать. Çакăн пек тăрăхра вырнаçнă манăн тăван кил, унта эпĕ юратнă асаттепе асанне, тĕнчери чи лайăх атте пурăнать. Йăмăкпа иксĕмĕр ăна çав тери юрататпăр. Пирĕнпе аттен шăллĕ те пурăнать. Ăна та юрататпăр эпир. Вăл та мĕн тери лайăх. Ырă кăмăллăпа юрату, ăнлану хуçаланакан çемьере урăхла пулаять-и вара? Паллах, кашни çыншăн хăйĕн килĕ – чи лайăххи.

Çынсен пурăнмалли пĕртен-пĕр кĕтесне ултавлăн туртса илекен усал чунлă аппасемпе тетесем ăçтан тупăнаççĕ-ши тулккăш? Вĕсене пулах хӳтлĕхсĕррисем кил-çуртсăр тăрса юлаççĕ те. Хăйсен тупăшĕшĕн çапла суя ĕçпе аппаланакансем пурри мана питĕ кулянтарать. Эпĕ пĕчĕк-ха, вĕренетĕп кăна. Анчах та ырăлăхпа тĕрĕслĕх çĕнтерессе чунран шанатăп. Кашни çын хăйĕн çуртĕнче пурăнасса шанатăп. Мĕн тери аван вĕт-ха – тăван кил пурри!

**Ксения ФЕДОРОВА.**
Канаш районĕ.

# Телей тути

Пирĕн тĕлĕнмелле çемье çинчен таврара ахаль те пĕлеççĕ. Манăн вара республикăра пурăнакансене каласа кăтартас килет.

7 çул каялла асамлăх хăватне туйса илтĕм: эпĕ атте-аннелĕ пултăм. Çав тапхăрти кашни минута асра тытатăп. Çуркуннехи хĕвеллĕ кунччĕ. Интернат умне кĕмĕл тĕслĕ çăмăл машина килсе чарăнчĕ. Çак саманта кĕтсе иртенпех кашни 5-6 минутра чупса пырса чӳречерен пăхнине пытармастăп. Кăштахран ман пата воспитательсем çитрĕç. Унтан çĕнĕ атте-аннепе çавăтăнса интернатран туха каятăп. Урама уяв сăнĕ çапнă: пĕлĕт ытти чухнехинчен кăвакрах, кайăксем юрлаççĕ, çил ачисем манăн çӳçе ачашласа сапалаççĕ. Хĕвелĕ, хĕвелĕ тата çăвар тулли кулнăн туйăнать. Вăл та манпа пĕрле савăнать. Машинăра тата пысăкрах парне кĕтет иккен. Мана илме çемьепех килнĕ. Тӳрех пиччесемпе тата аппасемпе паллаштарчĕç. Сăмах май, 4 аппа та ман пекех лекнĕ çак йыша. Акă эпĕ, тулли кăмăллăскер, машинăпа КИЛЕ, КИЛЕ каятăп!

Çакăнтанпа эпĕ Иливановсен пысăк та туслă çемйинче пурăнатăп. Пирĕн килте аслисене хисеплеççĕ, йăх-несĕле асра тытаççĕ. Асатте Михаил Михайлович çемье историйĕпе паллаштарчĕ. Иливановсен несĕл тымарĕ Куславкка районĕнчи Елчĕк тăрăхĕнчи авалхи пăлхар йăхĕпе çыхăннă. Хушамат илни те хăйне май кăсăклă. Ĕлĕкрех Христос тĕнне йышăнакансене Иван ят панă. Ăна нумайтурăлăх тĕнĕн ячĕ çумне хушнă. Пирĕн мăн асатте Элеш-Иван тĕне кĕнĕ хыççăн Иливанов хушамат илнĕ.

Элеш-Иван илемлĕ çĕрте вырăн тупнă: хуралтăсем Энĕш енчи тăвайкки патнех çитнĕ. Тăвайккине тĕрлĕ йывăç лартса тултарнă вăл.

Манăн асатте Михаил йышлă та туслă çемьере çуралса çитĕннĕ. Пĕр-пĕрне пулăшни вăрçă çулĕсене тата ун хыççăнхи йывăр тапхăра чăтса иртмеме май панă. Вăл 1929 çулта çут тĕнчене килнĕ. 29-та авланнă. Шел, асаннене Маргарита Григорьевнăна эпĕ курман. Çапах асатте сăнӳкерчĕксем кăтартса унăн кун-çулĕпе паллаштарнă. Вăл Муркаш районĕнчи Юнкăпуçĕнчен качча килнĕ. Туслă пурăннăскерсем савăнăçпа хуйха çурмалла пайланă. Çемьере икĕ ывăл çурални, паллах – чи пĕлтерĕшлĕ самантсем. 1960 çулта – Валерий, 1965-мĕшĕнче пирĕн атте Юрий çут тĕнчене килнĕ. Асаттепе асаннене тăванпĕтенĕ кăна мар, ял-йыш та ырăпа кăна аса илет.

Асаттене иксĕмĕрĕн вăрттăн вырăн – Кирпĕч çырми – пурччĕ. Тахçан малтан çакăнта мăн асатте кирпĕч çапнă. Тĕрĕссипе, пирĕн ялта Иливановсен йăхĕпе çыхăннă вырăн нумай. Çакна ял халăхĕ те, çирĕп çемье хăватне хăнăхса çитнĕ аппасем те лайăх пĕлеççĕ. Çав вырăнсенчен иртнĕ чухне асатте те, çемье историйĕ те аса килет.

Иртнисĕр пуласлăх çук теççĕ. Пурнăç малалла тăсăлать. Эпир халĕ тăххăрăн – анне, атте, Алешăпа Саша пиччесем, Ксения, Татьяна, Ирина, Екатерина аппасем тата эпĕ – пурăнатпăр. Аннепе атте Валентина Ивановнăпа Юрий Михайлович – тĕлĕнмелле çынсем, иккĕшĕ те ырă чунлă тата ылтăн чĕреллĕ. Вĕсем чун ăшшине пирĕншĕн шеллемеççĕ. Унсăр пуçне анне пур ĕçе те ăста. Вăл çыхма, тĕрлеме, ӳкерме пĕлет. Манăн анне – чи-чи лайăххи! Чĕлхе çăтса ямалла пĕçерет тата. Ĕненмесен хăвăр килсе курăр! Çемье сĕтел хушшине пуçтарăнни – аннешĕн чи пысăк парне. Унашкалли тăтăшах пулать: тăхăр çуралнă куна тата çемье уявĕсене яланах пĕрле паллă тăватпăр. Вăл спортпа та туслă: хĕлле – йĕлтĕр сырать, çулла волейболла вылять.

Аннеçĕм, анне! Мати, маци, мамо... Пур чĕлхепе те çепĕç илтĕнет çак сăмах. Вăл – кашни ачашăнах чи çывăх, тăван, хаклă çын. Тата пур пепкешĕн те чи хитри, чи юратни, чи çепĕççи!

Пирĕн аттен пур ĕç патне те алли пырать. Пĕр-пĕр электроприбор юсамалла-и? Тархасшăн. Тетте ăсталамалла-и? Систер кăна. Пĕтĕм кăмăлтан сак е пукан туса ларать вăл. Ял-йыш унран канаш ыйтать, пулăшу кĕтет. Эпир, ачисем, çакна курса савăнатпăр. Пирĕн атте-анне ырă ятлă, апла тăк Элеш-Иванăн йăх-несĕлĕн йăли-йĕркине малалла тăсаççĕ вĕсем.

Манăн шухăшпа, аттепе анне – асамçăсем. Пĕлетĕр-и, çак çемьене килнĕренпе пирĕн, усрава илнĕ ачасен, ĕçре хамăра кăтартас кăмăл çуралчĕ. Ксенипе Татьяна хитре ӳкереççĕ, ал ĕçĕпе аппаланакан Ирина салфетка тĕрлет, эпир Катьăпа иксĕмĕр сцена çинче хамăра хăтлă туятпăр, юрлатпăр, ташлатпăр. Çемьери килĕшӳлĕх пире пурнăç çулĕпе çирĕппĕн утма май парать.

Тĕнчери пур ача та ашшĕпе амăшĕн ăшшине туйса çитĕнтĕрччĕ. Эпĕ, тĕрĕсрех, эпир – телейлĕ, мĕншĕн тесен юнашар атте-анне пур, вĕсене яланах юрататпăр. Çывăх çынсем малтан Ксюшăпа Таньăна, тепĕр 2 çултан Иришăна, унтан Екатеринăна тата мана телейлисен йышне кĕртнĕ. Алексейпа Александр пире тӳрех хăйсен хӳттине илчĕç.

Аттепе анне, çемье пуришĕнех шăпана тав тумалла, пурнăçа юратмалла. Çав вăхăтрах çут тĕнчере мĕн чухлĕ тăлăх ача! Вĕсен пурнăçĕ те йĕркелентĕрччĕ, ашшĕ-амăшĕ ачипе юрататтăрччĕ, кулăпа хавхалантартăрччĕ.

Атте-анне килĕ – лăпкăлăхпа хăтлăх утравĕ. Унта яланах пире кĕтĕç. Кирек ăçта кайсан та çывăх çынсем юратнине туйса вăй илĕпĕр. Вĕсен чунран тухакан кĕлĕ сăмахĕсем ачисене йывăрлăхсенчен сыхлĕç. Иливановсен туслă çемйине лекнĕшĕн мĕнешкел хĕпĕртенине сăмахпа каласа ăнлантарма та çук.

**Ольга ЧЕРНОВА,
Куславкка районĕнчи Елчĕк вăтам шкулĕнчи 8-мĕш класс вĕренекенĕ.**



**Вăрмар районĕн халăх депутачĕсен Канашĕн 1984 çулхи авăн уйăхĕн 24-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн, 1984 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнче çуралнă Августина Семеновăна ача çуртне яма йышăннă. Çапла майпа пĕчĕкскер Çĕмĕрлери «Елочка» ача çуртĕнче 2000 çулччenex пурăннă. Ăна тăлăхсемпе ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнисен йышне кĕртсе патшалăх шучĕпе пурăнма ирĕк панă. Анчах...**

# «Анне çумĕнче ачашланса ӳсмен эпĕ»

Ах, çак «анчахсем» Семенова ĕçĕнче темĕн чухлех. Пĕрремĕшĕнчен, ăна тăлăхсен йышне кĕртнĕха, анчах хут çинче ĕç-пуça вĕçне çитермен. Ун тĕлĕшпе тăлăх статусне официаллă майпа çирĕплетмен. Амăшĕ пепкине ача çуртĕнчех хăварма ыйтса çырнисĕр пуçне урăх нимĕнле хут та çук. Тĕрĕссипе вара хĕрарăма амăшĕн правинчен хăтармалла пулнă. Кун пирки хĕр çитĕниччен нихăш тивĕçлĕ орган та: ача çурчĕ те, хĕр вĕреннĕ 2 училище те – шухăша кайман.

Иккĕмĕшĕнчен, тăлăха вĕренсе пĕтерсен çурт-йĕр черетне тăратасси пирки никам та шухăшламан. Вăл администрацие хăй тĕллĕн кайса ятуллă кĕтесе тивĕçме пултарасса та никам та ăнлантарман. Çавна пулах Августина паян та /2004 çултанпа/ пропискăсăрах пурăнать.

Ача çуртĕнчен тухсан хĕр виçĕ çул Шупашкарти 23-мĕш училищĕре вĕреннĕ, общежитире пурăннă. Вăхăтлăх прописка тунă. Анчах вĕренӳ учрежденийĕ ăна тăлăхсен çурт-йĕр черетне тăратмаллине аса та илмен. Çав вăхăтрах Августина професси пĕлĕвĕ илнĕ хыççăн иккĕмĕш пуçламăш пĕлӳ илме ирĕк паррипе усă курса Сĕнтĕрвăрринчи училищĕре çулталăк вĕреннĕ. Анчах кунта та аслисем хĕре пулăшмаллине маннă. Пушшех те, кунтан вăл малтанхи пропискӑпах вĕренсе тухнă. Общежитири вăхăтлăх кил ĕмĕрлĕх мар, паллах, пĕр хушăран ăна пропискӑран кăлараççĕ. Çавăнтанпа вăл – кил-çуртсăррисен йышĕнче.

Вăхăт вара малаллах шунă. Хĕр 23 урлă та каçнă. Саккунпа килĕшӳллĕн вара ку çула çитиччен тăлăхсен çурт-йĕр черетне тăмалла. Вăхăт иртнĕ – эппин, пурăнмалли кĕтес ыйтăвĕ çук. Анчах Августина кун пирки пачах нимĕн те пĕлмен-çке...

Тĕнче хĕсĕр мар теççĕ. Ырă çынсем пурах. Августинăна ăнланакан, унăн нушине чĕре çывăхне илсе пулăшас текенсем те тупăннă. Вĕсем прокуратурăна ыйту çырма сĕннĕ. Çапла Августина 2010 çулта саккунлăх хуралçисенчен пулăшу ыйтнă. Тивĕçлĕ орган хĕр хутне кĕрсе унăн прависене туллин хӳтĕлеме тытăннă. Тăлăх хĕре, вăл тахçанах 23 çеç мар, 30 урлă каçнă пулин те хваттерпе тивĕçтерме йышăннă.

Тĕрĕслĕхе çиеле кăларма çăмăлах пулман. Ăна шыраса Семеновăпа прокуратура ĕçченĕсен тĕрлĕ суда темиçе те çитме тивнĕ. Шупашкарти Ленин районĕн прокурорĕн аслă пулăшуçи Людмила Бусова каласа кăтартнă тăрăх, пĕрисем хĕрĕн официаллă майпа тăлăх статусĕ çуккипе ыйтăва тивĕçтермен, теприсем вăл тахçанах палăртнă ӳсĕмрен иртнине çирĕплетнĕ. Анчах ЧР Аслă сучĕ ĕç-пуç çапла çаврăнса тухнинче хĕр айăпĕ çуккине кура ăна пурăнмалли кĕтеспе черетсĕр тивĕçтерме йышăннă.

## Каллех – «анчах...»

Аслă суд ку йышăнăва иртнĕ эрне пуçламăшĕнче çеç çирĕплетнĕ-ха, çавăнпах Августина хальлĕхе пропискӑсăррисен, кил-çуртсăррисен йышĕнчех. Часах çĕнĕ пӳрт ĕçки тăвасса шанса пурăнаканскерĕн шухăш-кăмăлне пĕлме эпир унпа телефонпа çыхăнтăмăр.

Хĕр 2004 çултанпах Мускавра пурăнать. Ун пирки иккĕленмесĕрех пултарулăх çынни темелле. Анчах /каллех çак союзпа усă курми тивет/ кунта та тĕрлĕ йывăрлăх ура хурса пырать-мĕн.

– Чи пысăк нуша – прописка çукки. Çавна пулах йĕркеллĕ ĕçе вырнаçаймастăп та. Кунта килнĕренпе ăçта кăна çитмерĕм-ши: курьер та, секретарь пулăшуçи те, япалапа апат-çимĕç сутуçи те... Организацисем тăрăх çӳресе кĕнекепе савăт-сапа та нумай сĕннĕ, кассирта та тăрăшнă. Халĕ акă кофе хатĕрлетĕп, – тет малтан ӳнерçе, кайран çĕвĕçе вĕреннĕскер.

Мĕншĕн Шупашкарта тĕпленмен-ха Августина? Мĕнле сăлтавпа çĕршывăмăрăн тĕп хулине туртăннă? Пысăк хулара çăмăлрах-мĕн: пропискӑсăррисене Шупашкарта ĕçе илмеççĕ, Мускавра ку тĕлĕшпе ансатрах. Апла пулин те пысăк шалуллă ĕçе вырнаçма çук.

– Шупашкарта подъездра çывăрни те пайтах пулнă. Чăннипех те урамра пурăнаттăм. Пĕррехинче тантăшăмсем Мускава чĕнчĕç. Вĕсем патĕнче хӳтлĕх тупрăм, тара ярса пурăнакан хваттерте ман валли те ăшă кĕтес тупăнчĕ. Паян пĕр пĕчĕк пӳлĕмре пĕччenex пурăнатăп, – тет хăйĕнпе паллаштарса Августина. – Шел, вăл пĕчĕк пулнăран унта ӳкерме çук. Картинăсем çырас тесен ятарлă вырăн кирлĕ. Ку каллех укçа-тенкĕпе çыхăннă.

Ӳкерме вара эпĕ ача чухнех юратнă-мĕн, анчах çакна хам ас тумастăп, воспитательсем каланипе çеç пĕлетĕп. Çав тери нумай картина ӳкертĕм теейместĕп, анчах пур. Хавхалану хумĕ 2014 çулта пырса çапрĕ. Ун чухне пĕр харăсах 14-15 ĕç пиçсе тухрĕ. Юратнă çынпа уйрăлнă хыççăнхи кăмăл-туйăм çапла тума хистерĕ-тĕр. Сальвадор Далин куравне çитнĕччĕ ун чухне. Мĕн тери чĕрĕскерсем манра та чун хĕлĕхне вăратрĕç, – тет экспрессионизм, абстракци мелĕпе çывăхскер. Пусма çинче акрилпа ĕçлет вăл.

Ӳкернĕ картинăсен шучĕ пысăк мар пулин те Августина пултарулăхне çӳллĕ шайра асăрханине каламалла. Хальхи вăхăтра унăн 35 ĕçĕ – Италире. Ку çĕршывра хăй те пĕрре мар пулнă вăл, туссем те тупнă. Итали чĕлхине те шĕкĕлчет. Ку çĕршыва татах çитме палăртать.

## «Анне»

– Тăлăхсене темшĕн юратмаççĕ пирĕн. Вĕсенчен общество та пăрăнма тăрăшать. Пурне те мар пулĕ, эпĕ хам мĕн курнинетуйнине калатăп. Тĕрлĕ пулăшăва та асăрхаман. Чылайăшĕ шăпах ман пек лару-тăрăва çакланать те. Халĕ тăлăх туссене хваттер илесси çинчен калатăп та – тĕлĕнеççĕ. Хăйсен тулли прависене пĕлменнисем те пур.

Общежитири комендант мана хăйĕн хĕрне юратнă пекех юрататчĕ. Ун чухнех çурт-йĕр ыйтăвĕпе администрацине кайма сĕннĕччĕ. Анчах пĕр çĕртен тепĕр вырăна, унтан – виççĕмĕшне, тăваттăмĕшне... хăваларĕç ун чухне. Юлашкинчен вĕçне-хĕрне тухасса шанми пултăм та алă султăм. Ман пеккисем татах та пур вĕт. Мускавра тăлăхсене пулăшакан фонд директорĕпе паллашсан вăл çеç ырă канашпа туллин пулăшса мĕн тумаллине – прокуратурăна каймаллине – сĕнчĕ.

Ыранхи куна нихăçан та палăртмастăп. Паянхипе пурăнма вĕреннĕ. Çавăнпах хваттер илсен Шупашкара тĕппипех куçăп тесе те калаймастăп-ха. Вăхăт кăтартĕ. Малтанлăха Чăваш Ене таврăнатăпах. Ӳкерме те пăрахмăп, кăмăл-туйăма çĕнĕрен-çĕнĕ ĕçре кăтартма май шырăп, – пĕлтерчĕ пултаруллăскер.

Августинăпа сывпуллашнă май уншăн «анне» сăмах пĕлтерĕшне ыйтмасăр пултараймарăм.

– «Анне» – çуратни мар, ӳстерекенни. Вăл, манăн шухăшăмпа, çывăх юлташ пулмалла. Вăрçаканни, вĕрентекенни мар – канаш параканни, пулăшаканни. Тепĕр чухне хăш-пĕр пĕлĕш кун çути парнеленĕ çынпа епле хирĕçнине сăнатăп та манăн анне çуккишĕн кăштах савăнатăп та. Çапла, ун çумĕнче ачашланса ӳсмен эпĕ, анчах пурнăçăмра чунпа çывăх темиçе чăн-чăн юлташ пур. Вĕсене эпĕ çав тери хаклатăп, вĕсем – манăн çемье.

**Татьяна НАУМОВА.**

# Сусăрсен прависене прокуратура хӳтĕлет

**Социаллă тата транспорт инфраструктурин объекчĕсене сусăрсем чăрмавсăр çитееççĕ-и? Шăпах çак ыйтăва халалларĕ те ЧР Прокуратури пĕрремĕш уçă форумне. Вăл юнкун Наци библиотекинче иртрĕ.**

Ыйтăва сӳтсе явма форума прокуратура ĕçченĕсемпе пĕрлех тĕрлĕ ведомство представителĕсем, общество организацийĕн хастарĕсем хутшăнчĕç. Ку тĕлĕшпе республикăра чăннипех те çитменлĕхсем чылаййине каларĕç, вĕсене татса памалли майсене пĕрле шырамаллипе килĕшрĕç.

Форума уçнă май ЧР Прокурорĕ Сергей Легостаев экономикăн паянхи лару-тăрăвĕнче социаллă тата транспорт инфрастуктурин объекчĕсене сусăрсене те кĕме-тухма пĕтĕм май туса парасси приоритетсенчен пĕри иккенне, ăна пысăк тимлĕх уйăрса граждан обществипе хутшăнса ĕçлемеллине палăртрĕ.

Сергей Валентинович каланă тăрăх, сусăрсемпе ватăсен социаллă прависене хӳтĕлес тĕлĕшпе кăçал кăна саккуна 322 хутчен пăснă, 156 представлени çырнă. Вĕсене пăхса тухнă май 114 сăпат тĕлĕшпе дисциплинарлă йышăну кăларнă, 23 çынна административлă явап тыттарнă.

Прокурорсем сусăрсене хӳтĕленĕ май вĕсене социаллă объектсене кĕме-тухма май туса панине, автопарковкăра вырăн уйăрнине те тимлĕ пăхаççĕ. Паян Чăваш Енре 88 пин ытла сусăр пурăнать. Вĕсенчен 3,2 пинĕшĕ хăй тĕллĕн куçса çӳреймест. Прокурорсем вара сусăрсем валли чăрмавсăр тавралăх çуккине тăтăшах палăртаççĕ. Чылай çĕрте пандуссем те йĕркелемен, пуррисем те чылайăшĕ – нормăна пăсса лартнăскерсем.

Тĕрĕссипе, татса паман ыйту чылай. Пандус вĕсенчен – чи ансатти.

– Сусăрсен прависене сывлăх сыхлавĕпе вĕренӳ, культура учрежденийĕсем, суту-илӳ, апатлану предприятийĕсем, çыхăнупа транспорт организацийĕсем те пăсаççĕ: вĕсенче пандуссем, карлăксем, персонала чĕнмелли пускăчсем çук. Прокурор тĕрĕслевĕ хыççăнхи суд йышăнăвне ячĕшĕн çеç пурнăçланă тĕслĕхсем те пур. Республикăри кашни районпа хуларах вĕсем. 2015-2016 çулсенче тĕрлĕ тĕрĕслевпе 275 вырăна çитнĕ. Кашнинче тенĕ пекех саккуна пăснине асăрханă, – палăртрĕ ЧР Прокуратурин федераци саккунне пăхăннине тĕрĕслесе тăракан управленийĕн ертӳçи Ирина Репкина.

Сусăрсен прависене пăснă тĕслĕх, сăмахран, Комсомольски район больницинче те пулнă. Кунта ача-пăча тата çемье тухтăрĕн уйрăмне, администраци çуртне кĕнĕ çĕрте сусăрсене чăрмавсем кĕтнĕ. Шăмăршă районĕнчи Карапай Шăмăршăри психоневрологи интернатĕнче те пандус вырнаçтарман. Кунашкал йĕркесĕрлĕхе Елчĕк район больницинче те асăрханă пакунлисем. Кунта та пандуспа карлăк, ĕçченсене чĕнмелли пускăч пулман.

Çĕмĕрлери районсен хушшинчи прокуратура ĕçченĕсем вара нумай хваттерлĕ çуртра пурăнакан хĕрарăм, сусăр ача амăшĕ, çуртра пандус вырнаçтарма ыйтса çырнине тивĕçтерменнине палăртнă. Тĕрĕслев хыççăн район администраци пуçлăхĕ ячĕпе представлени çырсан çеç çитменлĕхе пĕтернĕ.

Шупашкарти аэропорт вокзалĕ те малтанах пĕтĕм нормăна тивĕçтермен. Унта хăй тĕллĕн куçса çӳрейменнисем валли пур услови те пулман. Чăрмавсем алăкранах пуçланнă. Сывлăш транспорчĕ çине кĕлетки хускалманнисене лартса-антармалли ятарлă хатĕр те пулман. Директор ячĕпе представлени çырсан çеç пĕтĕмпех йĕркене кĕнĕ.

Кунашкал тĕслĕх темĕн чухлех. Вĕсене Ирина Владимировна темччenex калама пултарать-тĕр.

– Чылай чухне сусăрсем валли майсене ячĕшĕн çеç тăваççĕ. Пĕрре пăхсан пĕтĕмпех йĕркеллĕ пек. Тĕрĕслев ирттерсен вĕсем нормăна тивĕçтерменни палăрать. Чылай чухне тата прокурор хушăвне те ячĕшĕн çеç пурнăçлаççĕ. Кунашкал тĕслĕхе те сахал мар палăртнă, – терĕ Ирина Репкина. Сăмахне çирĕплетсе темиçе тĕслĕх те илсе пачĕ.

Хăш-пĕр вырăнта пандуссем çукки сусăрсемшĕн çеç мар, ача кӳмиллĕ амăшĕсемшĕн те çав тери кансĕррине те каларĕç форумра. Хăш-пĕр организацие çитсен çитменлĕхсем пирки калама тапратсан теприсем тата: «Пирĕн пата кунашкаллисем килмеççĕ», – теме пăхаççĕ-мĕн.

Раççейри Сусăрсен обществин республикăри организацийĕн председателĕ Маргарита Кузьминых сăмах илнĕ май çитес çул хăйне евĕр мониторинг ирттерме палăртнине пĕлтерчĕ. Районсене сусăрсен кӳмипе тухса çӳресшĕн вĕсем. Пандуссем вырнаçтаракансене вĕсемпе хăйсене хăпарса пăхма сĕнесшĕн. Чĕрĕ-сывăскерсем пултарайĕç-и? Хăпарса çитсен кутăн уçăлакан алăкран кĕрейĕç-и?

– Çанталăк пăрлантарнăранпа та йывăрлăхсем тупăнчĕç. Чарăну çывăхĕнче хăйăр сапкаланăха, анчах кăштах айккинерех вырнаçнă пандуссем – пăр айĕнче. Унтан епле хăпармалла? Чылай светофор сасă кăлармасть тата. Куç курманнисемшĕн ку та пысăк пăтăрмах, – терĕ Маргарита Павловна.

Сусăрсемшĕн общество транспорчĕпе усă курасси çав тери йывăррине шута илсе ытти регионти пек социаллă такси кирли пирки сăмах хускатрĕ вăл.

Транспорт ыйтăвĕпе çыхăннă йывăрлăхсем çинчен Куç курманнисен обществин ертӳçи Юрий Сергеев та каларĕ. Пухăннисем тата ытти тĕрлĕ ыйтăва хускатрĕç. Вĕсене тĕрлĕ ведомствон пĕрле татса памаллипе килĕшрĕç. Ĕçпуç епле пурнăçланнине прокуратура та сăнасах тăрĕ, куçран вĕçертмĕ. Сергей Легостаев форума пĕтĕмлетнĕ май чи малтанах çынлăх туйăмне сыхламаллине аса илтерчĕ.

**Анна НИКОЛАЕВА.**

*

## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Ветчина рулечĕ



**12 рулет валли 350 грамм ветчина, 2 шăл ыхра, 200 грамм хытă сыр, 100 грамм аçтăрхан мăйăрĕ, майонез, укроп кирлĕ.**

Ветчинана çӳхен касмалла. Теркăланă сырпа ыхрана, вĕтетнĕ аçтăрхан мăйăрне майонезпа пăтратмалла. Çак хутăша ветчина çине хурса рулет майлă çавăрмалла та тытăнтармалла.

### Креветка салачĕ

**400 грамм креветка, консервланă 100 грамм куккурус, 50 грамм рис, 1 панулми, 100 грамм хытă сыр, 2 çăмарта, 200 грамм майонез, çу çырли кирлĕ.**

Çăмартана, риса, креветкăна пĕçермелле. Çăмартана вĕттĕн касмалла, сыра теркăламалла. Салата сийлесе /çăмарта – рис – панулми – креветка – куккурус – сыр/ хумалла. Кашни сийе майонез сĕрмелле. Çу çырлипе илемлетмелле.

### Чăх какайĕпе, помидорпа

**200 грамм чăх какайĕ, 100 грамм сыр, 3 çăмарта, 2 помидор, 200 миллилитр майонез кирлĕ.**

Чăх какайне, çăмартана пĕçермелле. Çăмартан шуррипе саррине уйăрăммăн, сыра теркăламалла, чăх какайне тăваткалласа турамалла. Помидора çаврашкан касмалла. Салата сийлесе /чăх какайĕ – сыр – помидор – çăмарта шурри – çăмарта сарри/ хăпартмалла. Кашни сийе майонез сĕрмелле. Çиеле вĕтетнĕ петрушка е укроп сапма юрать.

### Кавăн яшки

**1 литр чăх бульонĕ, 500 грамм кавăн, 100 грамм çĕрулми, 2-3 шăл ыхра, 4 апат кашăкĕ олива çăвĕ, тăвар, авăртнă хура пăрăç, 4 татăк шурă çăкăр кирлĕ.**

Кавăнпа çĕрулмие – вĕттĕн, ыхрана çаврашкан касмалла. Пахчаçимĕçе 3 минут ăшаламалла. Унтан кавăнпа çĕрулмие вĕрекен бульона ямалла. 20 минут пĕçермелле, тăварпа пăрăç хушмалла. Яшкана блендерпа пăтратмалла. Тăваткалласа каснă çăкăра типĕ çатмара ăшаламалла. Сĕтел çине лартиччен кавăн яшкине сухари ямалла.

### Кавăн хăпартăвĕ

**300 грамм кавăн, 2,5 апат кашăкĕ манна кĕрпи, 2 апат кашăкĕ исĕм, 1 çăмарта, 2 апат кашăкĕ сахăр, чĕптĕм ванилин кирлĕ.**

Тăваткалласа туранă кавăна вĕрекен шыва ямалла. 10 минут пĕçерсен сăрхăнтармалла. Кавăна блендерпа вĕтетмелле, шӳтернĕ исĕм, манна кĕрпи, çăмарта хушмалла. 15 минутран çак хутăша çу сĕрнĕ çатмана ямалла. Хăпартăва духовкăра пĕçермелле.

### Смузи

**1 панулми, 3 киви, 1 банан, 200 грамм вăрăсăр исĕм çырли, 20 грамм импĕр тымарĕ, 1 стакан симĕс чей кирлĕ.**

Импĕр тымарне теркăламалла. Симĕс чейе янă улма-çырлана блендерпа вĕтетмелле, импĕр тымарĕ, пыл хушмалла. Смузие стакана ямалла.

### Кекс

**150 грамм сахăр, 1 стакан çăнăх, 2 çăмарта, 100 миллилитр тип çу, 1 пакет кăпăшлантаракан хутăш кирлĕ.**

**Крем валли 1 апат кашăкĕ услам çу, 1 стакан сĕт, 1 çăмарта сарри, 4 апат кашăкĕ сахăр çăнăхĕ, 3 апат кашăкĕ çăнăх, ванилин хатĕрлемелле.**

Çăмартана сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла, тип çу, çăнăхпа кăпăшлантаракан хутăш ярса чуста çăрмалла.

Сĕте çăмарта саррипе, услам çупа, сахăр çăнăхĕпе, ванилинпа, çăнăхпа пăтратмалла. Крема вăйсăр çулăм çинче пĕçермелле.

Ятарлă формăна чуста ямалла, 1 чей кашăкĕ крем хумалла, ăна чустапа витмелле. Кекса 30 минутлăха духовкăна лартмалла.

### «Кăмпа уçланки» кукăль

**300 грамм чуста, 1 килограмм çĕрулми, 2 çăмарта, пĕçернĕ е маринадланă 300 грамм кăмпа, укроп, тăвар, техĕмлĕх, 2 апат кашăкĕ майонез кирлĕ.**

Пĕçернĕ çĕрулмие тӳмелле, вĕтетнĕ укроп, майонез, тăвар, техĕмлĕх хушмалла. Йĕтĕрленĕ чустана тип çу сĕрнĕ çатмана сармалла. Çĕрулми нимĕрĕ хумалла. Ăна кăмпапа витмелле. Çиелтен пăтратса кăпăклантарнă çăмарта ямалла. 30-35 минутран кукăле духовкăран кăларма юрать.

## СЫВЛĂХ

# Алоэпе каланхоэ



**Шăнса чирлесен.** 300 грамм алоэ çулçине аш армане витĕр кăларса 3 апат кашăкĕ пылпа, 3 апат кашăкĕ медицина спирчĕпе хутăштармалла. Апат умĕн кунне виçĕ хутчен пĕрер чей кашăкĕ ĕçмелле.

**Сунасран.** Алоэ сĕткенне вĕри шывпа /1:10 пайпа/ хутăштармалла, ăна сăмсан кашни шăтăкне кунне темиçе хутчен 2-3 тумлам ямалла. Çапла – хăвăра лайăх туйма тытăниччене. Е сăмсан кашни хăвăлне каланхоэ виçĕ-пилĕк тумлам сĕткенне тумлатмалла.

**Гайморит** асаплантарсан алоэ сĕткенне, шĕпĕн курăкĕ шывне тата пыла пĕр тан илмелле, хутăша сăмса кашни хăвăлне кунне 3-5 хутчен 5-10 тумлам тумлатмалла. Хутăша сурса тăкмалла.

**Ӳслĕкрен.** Çур стакан алоэ сĕткенне 3 апат кашăкĕ пылпа тата 50 грамм услам çупа пăтратмалла. Хутăша апат умĕн кунне икĕ хутчен пĕрер апат кашăкĕ ĕçмелле. Сывалу курсĕ – эрнерен кая мар.

**Пыр ыратнине** кунне темиçе хутчен каланхоэ сĕткенĕпе /çурмаран шывпа хутăштармалла/ чӳхени ирттерет.

## УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ

● Сăрлама пуçличчен алла тип çу сĕрмелле – кайран çуса тасатма çăмăлрах пулĕ.

● Ăшăтмалли батарейăна тасатмашкăн щеткăпа тата пылесоспа усă курмалла.

● Чăмлакпа пластилин кантăкăн пĕчĕк пайĕсене пуçтарма пулăшĕç.

● Çĕрулми çăнăхĕ хушсан тăвар нӳрелмест.

● Пăрса лартмалли вырăна вазелин е машина çăвĕ сĕрсен çилĕм тюбикне уçма çăмăлрах пулĕ.

● Крассын е çуллă сăрă шăрши ан кĕтĕр тесен алла супăньпе çунă хыççăн типĕ сарпăрç янă шывра чӳхемелле.

● Хул айĕнчи тар йĕрне лимон сĕткенĕпе е апат содипе тасатма пулать.

● Тĕс кăларакан çăм кофтăна шăнтмăша чикмелле.

● Пит кремĕпе вараланнă çи-пуçа хырăнмалли кăпăк лайăх тасатать.

● Пушмак хĕсет-и? Ăна шыв тултарнă çатăрка чиксе шăнтмăша хумалла.

● Шывпа йĕпетсен сăран курткă çемçелет.

● Урана хытă дезодорант сĕрсен çĕнĕ пушмак ыраттармĕ.

● Шала журнал çаврăса чиксен атă-пушмак формине çухатмасть.

● Тумтир çинчи хĕрлĕ писеве çӳçе хытармалли лак сирпĕтсе сăтăрмалла.

● Вĕри чейе хăвăрт сивĕтмелле-и? Куркана 3-4 чей е 2 апат кашăкĕ ямалла.

● Услам çу сĕрнĕ сыр час типмест.

● Çатмана тăвар сапса хĕртсен ăшаланă чухне апат тĕпне çыпăçмасть.

● Аçтăрхан мăйăрĕн тĕшшипе сăтăрсан йывăç сĕтел-пукан çинчи чĕрĕк курăнмасть.

## ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

# Тăпăртатса тăрать...

**Çанталăк сивĕтсен урама кăларманран выльăх-чĕрлĕх сахалрах утма тытăнать, ытларах витере тăрать. Çавăнпах шăпах халĕ уричĕрнине уйрăмах сăнамалла, ăна йĕркене кĕртмелле. Вăрăмланнă чĕрнене касмалла. Çĕр çине лекекеннине çеç мар, сывлăшра çакăнаканнине те. Анчах асăрханмалла, ытлашши кассан юн тухма пултарать.**



**Выльăх чĕрнине касма ятарлă хатĕр çук тăк пахча-садра усă куракан хачă та юрăхлă. Тăватă уралăскерне малтан йĕпе вырăнта тăратсан чĕрнене касма çăмăлрах пулĕ – кун пек вăл шӳсе çемçелет.**

Выльăх чĕрнине тĕрлĕ чир çаклансан та сăнасах тăмалла.

**Чĕрне çĕрĕкĕ** – инфекци чирĕ. Вăл ытларах çуркунне е кĕркунне ерет. Выльăх пĕрмай йĕпе вырăнта тăни ку амака аталанма пулăшать. Чĕрнине пăхса-тирпейлесе тăман выльăха ытларах çакланать вăл.

Чир ернине выльăх ухсахланăран, çĕрĕк шăрши кĕнĕрен, чĕрне тавра ӳт тăртаннăран чухлама пулать. Шала кайма тытăнсан чĕрне ӳтрен хăпăнма, йăлмака юхтарма тытăнать. Ăна вăхăтра асăрхамасан чĕрне пачах татăлса ӳкме, выльăх ури суранланма пултарать, юна таса мар çаклансан – вилме те.

Чирлĕ выльăха ыттисенчен уйăрмалла, чĕрнине тасатмалла, касмалла. 5-10 процентлă формалин е 10 процентлă пăхăр купоросĕн шывĕпе 3 кун чӳхемелле. Унпа профилактика тĕлĕшĕнчен сывă выльăх урине те тасатмалла. Выльăха антибиотик ĕçтермелле. Кун пирки ветеринарпа канашламаллах.

**Абсцесс** ерекен чир шутланмасть. Вăл ытларах выльăх урине пăтапа е чулпа ыраттарсан, чĕрнине ытла шала кĕрсе кассан пулать. Кун пек чухне выльăх хăрах урипе ухсахлать. Чĕрне таврашĕнчи ӳте тытса пăхсан вĕри туйăнать, ура тупанĕ шыçăнать.

Ку тĕслĕхре чĕрнене суран тарăнăшĕпе касаççĕ, дезинфекцилеççĕ, антибиотиклĕ маç сĕрсе çыхаççĕ. Сурана тӳрлениччен куллен çыхмалла. Тĕртĕмрен те антибиотик /бициллин, стрептомицин/ ямалла.

**Ламинит** выльăха тĕрлĕ тырăпа ытлашши апатлантарнăран, типĕ апат хыççăн тӳрех симĕс курăкпа белоклă апат нумай лекнĕрен аталанать. Чĕрне тавра ӳт хĕрелсе шыçăнать, выльăх утма ӳркенет, апатланнă хыççăн час-часах ура хуçлатса тăрать.

Выльăха пулăшма ăшăтакан компресс хумалла, маç сĕрмелле. Шыçăннине иртерекен препаратсемпе /дексаметазон/ усă курмалла. Апат виçине чакармалла, тырра нумаях пулмасть çинĕ тăк тăварлă шыв ĕçтерни те витĕмлĕ. Чирлесе иртернĕ выльăхăн чĕрни кукăрăлать. Тепĕр чухне выльăх ура çине тăрайманни те пулать. Кун пеккине какая яни вырăнлăрах.

**Урапа чĕрне суранланасси** час-часах пулать, уйрăмах – пĕр витене темиçен хупсан. Суран тарăн мар тăк ăна тасатни те çителĕклĕ. Йывăр сурансене тепĕр чухне çĕлеме те тивет.

## КАЙĂК-КĔШĔК

# Ури ан шăнтăр

Хĕлле хурсене типĕ апат, силос, шăмă тата пулă çăнăхĕ, шăтарнă тырă пама юрать. Кăрлач уйăхĕ çитиччен куллен икĕ хут апатлантармалла. Унтан виçĕ хут çитерме пуçламалла. Кайăк-кĕшĕк рационне типĕ е йĕпетнĕ вĕлтĕренпе утă та кĕртмелле. Ку апат çăмарта тунă чухне ырă витĕм кӳрĕ. Хурсене тырă /ытларах чухне сĕлĕ/ лартса памалла. Тулăпа урпа çитерсен килти кайăк ытла çулланать.

Тырра çĕрулмипе, шӳтернĕ пăрçапа улăштарма юрать. Килти кайăка йӳçнĕ апат памалла мар, унсăрăн унăн вар-хырăм ĕçĕ пăсăлма пултарать.

Хур çĕрле те çиет, çавăнпа каçхине пур апата пуçтарса кĕмелле мар. Витере шапа хуранĕ, пурă, çăмарта хуппи пуррине тĕрĕслесех тămалла.

Амине пуснă вăхăтра аçине ытларах çитермелле, мĕншĕн тесен вăл вăйне нумай пĕтерет. Хурсене куллен пĕрер сехет уçăлма кăларсан чĕпписем йышлă тухаççĕ. Ури шăнасран хурсене çӳрекен вырăна юртан тасатмалла.

ÇЫРУ ÇЫРТĂМ ВАСКАСА

# Телейĕм вĕçерĕнсе тармĕ-ши?

Вунсаккăрта качча тухрăм эпĕ. Часах ача çуратрăм. Упăшкам пурнăçăмри пĕрремĕш юратуччĕ, пĕрремĕш арçыннăчĕ. Эпĕ ăна çав тери юрататтăм. Хăй те савнине çирĕплететчĕ. Хĕрĕх чĕрнеленнине пĕлсен пепкене тем пулсан та çуратмаллине каларе, качча илме шантарчĕ. Çапла пулчĕ те. Пĕрлешрĕмĕр. Хĕр çуралчĕ.

Упăшкам ача пăхма та, килте те пулăшатчĕ-ха, анчах питĕ нумай ĕçетчĕ. Çавна пулах тăтăшах харкашаттăмăр та. Çулталăк çурăран йыш татах хушăнчĕ – иккĕмĕш хĕр çуралчĕ. Эпĕ килте тараттăм. Укçа-тенкĕ çитместчĕ. Ĕçлесе илнине те çуррине эрех-сăра илсех пĕтеретчĕ арçын. Кун пек лару-тăрура епле хĕрарăм сăмах чĕнмесĕр чăтайĕ? Виçĕ çултан тӳсĕмлĕх пĕтрĕ те икĕ ачана йăтса Шупашкар çывăхĕнчи ялта пурăнакан кукамай патне тухса кайрăм. Хĕрарăмсăр пурăнма хăнăхманран-ши, эпир уншăн чăннипех пĕлтерĕшлĕрен-ши – упăшка ĕçме пăрахрĕ. Пĕр хушăран каллех пĕрле пурăнма тытăнтăмăр.

Халĕ ĕнтĕ иксĕмĕр те ĕçлеттĕмĕр, ачасене çитĕнтереттĕмĕр. Яланах унпаччĕ эпĕ. Пĕрле вĕреннĕ туссемпе тĕл пулма та, хĕрсемпе усăлма та каймастăм. Унсăрăн хăнана çитесси пирки тĕлленмен те. Ĕçри уявсене те яланах пĕрле чĕннĕ. Тепĕр тесен, вăл мана кунашкал мероприятисене нихăçан та пĕччен яман. Кĕвĕçетчĕ.

Вăхăт малаллах шурĕ. Эпир пĕрлешни те 10 çул çитрĕ. Нумай та, сахал та мар ку. Анчах çак тапхăрта пирĕн хутшăну улшăнчĕ. Çамрăк чухнехи хĕрӳлĕх сӳнчĕ. Туйăмсем шĕвелчĕç. Эпир сайра хутра çеç калаçатпăр. Романтика тени пачах та çухалчĕ. Эпĕ çине тăнипех упăшка куçăмсăр майпа вĕренме кĕнĕччĕ те çĕрĕ-çĕрĕпе ун вырăнне курс ĕçĕсем çыраттăм, тĕрĕслев хушăвĕсене шутлаттăм. Вăл çакна эпĕ хамăн тивĕçе пурнăçланă пек йышăнса тав та тумастчĕ.

Нихăçан та пуян пурăнман эпир. Апла пулин те пур-çук укçапа ун валли машина туянтăмăр. Ĕç укçи те е кустăрма улăштарса, е машина юсаса тăкакланать хушăран. Пĕр сăмах та каламастăп куншăн. Анчах пирĕн хушăра пурпĕр ăнланмалăх хуçаланма тытăнчĕ. Пĕр-пĕринчен пач сивĕнтĕмĕр тесен тĕрĕсрех-тĕр. «Çемье» тени çеç пĕрлештерет.

Кукамайпах пурăнатпăр. Хулара уйрăм кĕтес тара илме упăшкам пач килĕшмест. Тăванăм вара юлашки çулсенче куллен мăкăртатать. Тавлашмалли-хирĕçмелли сăлтав тăтăшах тупать. Тепĕр чухне кун каçа темиçе хутчен те вăрçăнатпăр. Çавăнпах ĕç хыççăн та киле пачах таврăнас килмест.

Пĕррехинче упăшка патне хĕрарăм пĕлĕшĕ ытла та час-час шăнкăравлама тытăннине асăрхарăм. Е пăта çапмалла унăн, е лампочка улăштармалла. Курмăш пултăм. Чĕнмерĕм.

Çапла лару-тăрура пурăнатăп пулин те çав тери ача çуратас килет манăн. Пĕчĕкскерне укка-укка сиктерсе хамăн ачашланас килет-ши? Ăнланатăп-ха: манăнни пек условире виççĕмĕшĕ пирки шухăшламалли те çук. Çавах кăмăлăм çав енне неллех сулăнать...

Вăхăт иртнĕ май пусăрăнсах пытăм. Упăшкана пирĕн пурнăçра темĕн улăштармаллине çирĕплетсе халтан кайрăм. Анчах вăл мана итлемерĕ те, илтесшĕн те пулмарĕ. Çапла малаллах пурăнтăмăр. Пĕрле те пек эпир, анчах пĕр-пĕринчен çав тери аякра. Пирĕн хушă кунран-кун ӳссех пычĕ.

Эпĕ талăкĕпе ĕçлетĕп. Пĕр-икĕ çул каялла пирĕн коллектива çĕнĕ çын – каччă – килчĕ. Каçхине пушă вăхăт тупăнсан тем пирки те калаçса лараттăмăр унпа. Часах эпĕ ăна çамрăк чухнехилле пуçа çухатасла юратрăм. Çакă мана еплерех çунат хушнине пĕлесчĕ сирĕн! Йĕкĕт те мана килĕштерчĕ. Упăшкампа уйрăлса хăйĕн патне пурăнма куçма чĕнет. Хĕрĕмсене йышăнма та хирĕç мар вăл. Эпĕ ăна ача парнелессе чунран кĕтнине калать.

Мĕн тумаллине те пĕлместĕп. Упăшкаран кайма та шел пек. Те хăйне, те пĕрле ирттернĕ вăхăта хĕрхенетĕп? Е чун-чĕрем тĕпĕнче халĕ те упăшканах, хамăн пĕртен-пĕр савнинех, юрататăп-ши? Нимĕн те пĕлместĕп. Çав хушăрах иккĕленнĕ вăхăтра телейĕм алăран вĕçертĕнсе тарасран та шикленетĕп...

Вулакан хушшинче ăслă шухăш парса пулăшакан тупăнмĕ-ши?

**ВАЛЕНТИНА.**

ЧУНРИ

# Урăххипе йăпанăç шырарăм

Эпĕ ăна ача чухнех куç хывнă. Юрату туйăмĕ çулсерен вăйланса кăна пычĕ. Хăшĕ-пĕри манран ăшшăн кулма та пăхĕ. «Эх, айван, чуна усса калаçайман», – тейĕç. Вăтаннă пуль. Ăна ыттисем, манран патвартараххисем те, килĕштеретчĕç. Тен, тивĕçлисен йышĕнче асăрхаман та вăл мана?

Ялтан хулана килсен пĕрле усăлса çӳреттĕмĕр. Ун чухне кăмăлне тупмашкăн парне е чечек илме те укçа пулман. Эпир, студентсем, çурма выçă пурăнаттămăр. Ĕçе вырнаçма май килмен. Иксĕмĕр çавăтăнса утнă вăхăтра чĕре сиксе тухасла тапнине, сасă тытăннине туйнă-ши вăл? Куç – чун тĕкĕрĕ теççĕ. Юратупа тулнă куçран пăхса йăлт ăнланнă ĕнтĕ канăçа туртса илнĕскер.

Харсăртарах пулмаллаччĕ, кашни кун тĕлпулу шырамаллаччĕ унпа. Çавăн чухне, тен, чун лăпланатчĕ. Çирĕп утăм тăвайманшăн хама ӳпкелеттĕм. Çапах та эпĕ нихăçан та вăйсăр пулман.

Уявсене сайра хутра кăна пĕрле паллă тунă. Чĕнсен – хирĕçлетчĕ. Çав вăхăтрах хăй урăх юлташ патĕнче хăналанатчĕ. Кĕтсе йăлăхрăм та пĕр хĕрпе паллашрăм. Вăхăт иртнĕрмелле çеç хутшăнтăм унпа. Пĕррехинче ун патĕнче çĕр каçрăм. Манăн та пĕве кĕнине, юн вылянине кăтартас килчĕ. Çакăн хыççăн унăн çие юлчĕ. Мĕн тумалла? Паллах, авланмалла. Унсăрăн вăл тăванĕсен куçĕнчен мĕнле пăхĕ? Эпĕ те яваплăхран тарас çук.

Пирĕн çемьере ача çуралчĕ. Малтанах хамăра ятăн пурăнмалли кĕтес те илеймен. Çын пӳлĕмĕнче хĕсĕнтĕмĕр. Пурнăç çулĕпе чăн юратупа пĕрле утма пӳрменни чуна ыраттаратчĕ. Арăм та юнашарах, анчах пĕр вĕçĕм ăна курас килетчĕ. Ăçта кайса кĕмелле çав самантра? Чăтса иртерме, ай-ай, мĕнле йывăр. Эпĕ çăмăлрах мел суйласа илтĕм: мăшăр тăвайман хĕрпе вăрттăн тĕл пулма пуçларăм. Ĕçри пӳлĕмне те, хваттерне те пысăк сумкăпа çитсе кĕреттĕм. Хĕрлĕ эрех те, улмаçырла та чикеттĕм унта. Хăш чухне кафере калаçса лараттăмăр.

Хăçанччен тăсăлĕччĕ-ши юратупа сукăрланнă çак тапхăр? Мана вăрахлăха командировкăна ячĕç. Иккĕмĕш ача çуралнă вăхăтра килте пулаймарăм. Мăшăрпа куллен икĕ-виçĕ хутчен телефонпа çыхăнаттăмăр. Вăл пур йывăрлăха та хăй тĕллĕн çĕнтерме хăнăхнинчен тĕлĕнеттĕм. Çакăншăн хисепе тивĕçлĕ мар-и вăл? Эпĕ вара юттипе йăпанăç шыратăп, çумри телее курма-хаклама пĕлместĕп. Тинех тăна кĕтĕм.

Вăхăт иртнĕçемĕн пĕрремĕш юрату манăçрĕ. Эпĕ ăна хамăн чĕререн кăларса пăрахрăм. Ун вырăнне арăм йышăнчĕ. Упăшки ăссăрла хăтланнăшăн куляннă та, макăрнă та пуль вăл. Халĕ хамах ӳкĕнетĕп. Пурнăç çавнашкал çаврăнса килнĕшĕн шăпана тав тăватăп. Мана пур енчен те аннă: арăм пукане пекех хитре, ачасем тăрăшуллă та маттур. Хула çывăхĕнче çурт лартрăмăр, çăмăл машина илтĕмĕр. Манăн урăххисем пирки шухăшлама вăхăт та çук.

**МИХАИЛ.**

САНĂН ТУСУ ПУЛАМ-И?

Эпĕ Николай ятлă, 33 çулта, 3-мĕш ушкăн инваличĕ. Ĕçместĕп, анчах та пирус туртатăп. Çемье çавăрас шухăшлă хĕрпе паллашасшăн. Ача пурри чăрмантармасть.

* * *

Юратнă хаçат урлă 35–40 çулсенчи арçынпа паллашас кăмăл пур.

**МАРИНА.**

Çывăх юлташ тата шанчăклă мăшăр пулса пурнăçри йывăрлăхсене пĕрле çĕнтерсе пыма, юратупа телей тупма тăрăшакан ырă кăмăллă та усă чунлă пикепе паллашас кăмăл пур. Эпĕ вăтам çулсенчи яштака арçын. Эрех-сăрапа иртĕхместĕп. Пуринчен ытла çын тĕрĕс пурăнма тăрăшнине хаклатăп.

**ВАЛЕРИЙ.**

Телефон номерĕсем – редакцире.

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Кĕрхи каç



Татьян аппа çурчĕ умĕнчи хурăн чăпар тĕспе хупланнă. Тахам ятарласа сарă пĕркенчĕк витнĕ тейĕн. Кассăн-кассăн çил килет те капăр çулçăсем çаврăна-çаврăна çĕре ӳкеççĕ.

– Эх, кĕрхи илем! Сарă хĕрупраç евĕрех-çке эсĕ, хурăнăм... – хăйпе хăй калаçрĕ арçын. – Çак вырăнта курнăçнăччĕ санпа, Лариса.

Хĕрĕх урлă каçнă Василий тăруках шухăша путрĕ. Куçĕ умне пилĕк-ултă çул каялла пулса иртни шуса тухрĕ.

Хальхи пекех кĕрхи каçчĕ. Василий ун чухне район центрĕнчен таврăнчĕ. Журналистăн ĕç сахал-им? Тепĕр чухне ир-ирех тăма та, каça юлма та тивет. Çул çинче тата? Вăхăтăн виçи çук çав. Кашни самант шутлă тепĕр чухне. Упирен, тăватă çухрăм пулать яла, çуранах утрĕ. Машинисем кăткă пасарĕ евĕрех, вĕçĕмсĕр вĕçтереççĕ – вăшт! çеç иртсе каяççĕ.

Каç сĕмлĕхĕнче йĕп чиксен те куç курмастчĕ, к-хм! ӳсĕрнĕ сасăпа тăруках чарăнчĕ арçын. Юнашарах хĕр тăрать иккен. Пăрăнса утмарĕ каччă – килне çитме темиçе утăм çеç ĕнтĕ.

– Ырă каç пултăр, – сывлăх сунчĕ Василий.

Хĕр Лариса ятлă иккен. Татьян аппан кӳршĕллĕ Вăрман Кипек ялĕнчи йăмăкĕн хĕрачи пулать. Паллашрĕç, çывăхланчĕç иккĕшĕ. Пĕрремĕш каç хыççăн иккĕмĕшĕ, виççĕмĕшĕ пулчĕ. Хĕр Шупашкарти культура институтĕнче вĕренет. Канмалли кунсенче яла килет. Амăшĕн аппăшне те манмасть – ял çывăхĕнчен иртнĕ чухне çула май кĕркелесе тухать.

Юратнă хĕрпе кил ăшшине пайлама шухăшланăччĕ Василий. Ашшĕ-амăшне те пĕлтернĕччĕ шухăш-кăмăлне. Аслисем килĕшнĕччĕ паллах. Пĕртен-пĕр ывăлĕ хĕрĕхе çывхарса пырать-çке. Çăмăл автомашина тытса çураçма та кайса килчĕç. Туй тумалли юлчĕ.

Анчах Лариса шанчăклă пулмарĕ. Вăл урăх кӳршĕ ялти сапсарă каччăна куç хывнă-мĕн. Лешĕ ăна вăрланă та кайнă. Шупашкарта хваттерте хăтлă вырăн тупнă иккĕшĕ. Юратсах, килĕштерсех пурăнаççĕ-ши?

Василий сап-сарă кăтра хурăн тĕлĕнче чарăнчĕ. Кăнтăр енчен юхса килекен çил йывăçа хускатахускатах илчĕ. Татьян аппа пирĕн хушăра çук ĕнтĕ. Сакăр теçеткене çывхарсан çĕре кĕчĕ вăл. Кăмăллă карчăкчĕ. Халĕ урама тăрăхла вырнаçнă кил-çуртра тăванĕсем хӳтлĕх тупнă.

Каç сĕмлĕхĕнче хăлхана каллех к-хм! к-хм! сасă хупларĕ. Тем тесен те пилĕк-ултă çул каяллахи сасă ку!

– Лариса! – утса пычĕ каччă хурăн çывăхне. – Мĕн çăмăлпа?

Пĕр-пĕринпе калаçу сыпăнчĕ вĕсен. Хĕрарăм мăшăрĕпе пурнăç тăвайман иккен. Юрату вăхăтлăха пынă. Малалла мĕн пулĕ?

**Георгий ТУСЛИ.**

Красноармейски районĕ.



Виктор СИМАКОВ

# Тивлет

Мĕншĕн-ха пурнăçра тепĕр чухне çавăн пек те пулать: эсĕ пĕрне юрататăн, саншăн урăххи çунать. Юрату виçкĕтеслĕхĕнче телейлĕ пулайăн-ши? Чăн-чăн телей пĕр-пĕрне юратнинче мар-ши? Кашни çамрăк çыннăн вăхăт çитсен мăшăр тупмалла, çемье çавăрмалла. Хĕрпе каччă ĕмĕрĕ хăналăха теççĕ. Çемье – ĕмĕрлĕхе. Анчах çак пурнăçа малтанах хатĕрленмелле: ĕçе юратмалла, хăвна тивĕçлĕ тытмалла. Юрату, пĕр-пĕрне хисеплени – çемье тĕрекĕ.

***

Ухтепи педучилище хыççăн Ачак ялĕнчи пуçламăш шкулта ачасене вĕрентме тытăнчĕ. Кунта пурĕ те иккĕн кăна ĕçлеççĕ. Ухтепи – 1-3-мĕш классенче, тепри 2-4-мĕш классенче вĕрентет. Педучилищĕре Ухтепи юрă-ташă кружокне хаваспах çӳретчĕ. Сцена çинче те вăл концертсенче пĕрре мар юрланă. Унăн уçă сасси, илемлĕ сăнĕ такама илĕртмелĕх пур. Шкулта ачасемпе юрă-ташă ушкăнĕ йĕркелерĕ.

Ухтепи мĕн пĕчĕкренпех ĕçе юратма хăнăхса ӳсрĕ. Амăшĕ ăна хĕрарăмăн çемьери тивĕçне вĕрентсе пычĕ. Ухтепи алсачăлха çыхма та, пир-катан тĕрлеме те, яшка-çăкăр пĕçерме те ачаран хăнăхса пычĕ. Амăшĕ унăн, Ука ятлăскер, колхоз ферминче ĕне сăватчĕ. Ашшĕ вара, Сантăр, колхозра платниксен ушкăнĕнче ĕçлетчĕ.

Ухтепи çиччĕ тултарсан шкула кайрĕ. Вĕренӳре ĕлкĕрсе пычĕ. Ука хăйĕн хĕрне те чăваш юррисем вĕрентетчĕ. Юрласси амăшĕнчен куçрĕ. Шкулта кăна мар, ялта та çамрăксемпе концертсем йĕркелерĕ хĕр.

Пĕрре ял клубĕн сцени çинче концерт пырать. Акă Ухтепи юрлать.

Тухрăм-чупрăм эпĕ кӳлĕ
хĕррине,
Çамрăк сăнăм ӳкрĕ шыв çине.
Çулăм хыпрĕ манăн çамрăк
чĕрене,
Ах, çухатрăм, эп çухатрăм
чунăм савнине.

Ухтепи, чăн-чăн артист евĕр, юрă çемми май хăйĕн сăнне кирлĕ пек улăштарма пултарать.

Ун хыççăн сцена çинче колхоз агрономĕ Сентиер юрлама тытăнчĕ.

Эй, яш-кĕрĕм, паттăр халăх,
Эй, ĕçлер-ха савăнмалăх,
Халь ĕçпе чапа тухар-ха
Савнă çĕршывра.

Сентиерĕн те сасси уçă – баритон. Вăл юрланă вăхăтра Ухтепи савăнса ун çине пăхса тăчĕ.

Юлашки вăхăтра Ухтепи пĕрмаях Сентиерпе пĕрле пулма тăрăшрĕ. Вĕсем иккĕшĕ те клуб çумĕнчи юрă ушкăнне çӳреççĕ. Ушкăна илемлĕх ертӳçи Тутимĕр ертсе пырать. Вăлах баян калать, çĕнĕ юрăсем вĕрентет. Баянсăр пуçне купăс та, сĕрме купăс та аван калать.

Тутимĕр культура училищи хыççăн кунти клубра ĕçлеме тытăнчĕ. Иртнĕ çул вăтăр тултарчĕ. 6 çул ĕнтĕ вăл авланни. Хăйĕн мăшăрĕпе Пинерпипе пĕр-пĕрне юратса, питĕ килĕштерсе пурăнаççĕ. Пинерпи колхозра счетоводра ĕçлет. Вĕсен пĕр ача пур. Шкула кайма тытăнман-ха. Ачана килте асламăшĕ пăхать. Хăйĕн мăшăрĕпе пĕрле Пинерпи те юрă-ташă ушкăнĕнче тăрать, репетицисене çӳрет. Концертсенче юрлать.

Ухтепи вĕсем килĕштерсе пурăннине ăмсанать. «Эпир те Сентиерпе пĕрлешес пулсан вĕсем пекех килĕштерсе пурăнăттăмăр» тесе шухăшлать.

– Сентиер, мана киле ăсататăн-и? – терĕ Ухтепи репетици хыççăн клубран тухсан.

– Мĕншĕн ăсатас мар çакăн пек маттур та чипер хĕре. Сана килне ăсатма эпĕ яланах хатĕр.

Çапла вĕсем калаçкаласа Ухтеписен килĕ умне çитнине те сисмерĕç.

– Тавах сана, Сентиер, мана киле çитернĕшĕн. Тепĕр чухне те çапла ăсатасса шанатăп. Санпа юнашар утма питĕ те кăмăллă.

– Чипер кĕрсе çывăр, Ухтепи, ырă тĕлĕксем курмалла пултăр. Сана çавна çеç сунатăп, – терĕ те Сентиер Ухтепие алă парса кайма тăчĕ.

– Тăхта-ха, – терĕ Ухтепи. Каччă хăй те сисмерĕ, хĕр тени ун патне чупса тенĕ пек пычĕ те Сентиере питĕнчен чуп туса илчĕ, хыççăнах килне тарса кĕчĕ.

– Нивушлĕ ку мана юрататать? – шухăшласа илчĕ Сентиер килĕ еннелле васкамасăр утнă май.

Сентиер Ухтепирен тăватă çул аслăрах. Вăл ялхуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн хăйсен колхозĕнчех агрономра ĕçлеме тытăнчĕ. Унăн хăйĕн юратнă хĕрĕ кӳршĕ ялтан, ялхуçалăх институтĕнчи ветеринари уйрăмĕнче юлашки çул вĕренет. Каникул вăхăтĕнче вара Сентиер ун патне çӳрет.

Кашни уявра çамрăксем ял халăхне концерт е спектакль кăтартса савăнтараççĕ. Сентиер концерт вăхăтĕнче яланах Ухтепипе пĕрле юрлать. Иккĕшĕ пĕрле юрлани те питĕ килĕшет.

– Сентиер мана те юрататать, те юратмасть, те вăхăт иртterme кăна киле ăсатать? – терĕ Ухтепи юлташне Эрнепие лешĕ çамрăксен хутшăнăвĕ пирки ыйтсан. – Вăл манпа юрату çинчен нихăçан та сăмах хускатмасть.

Пĕрре çапла Сентиер черетлĕ хут ăсатса ярсан, уйрăлас умĕн, юрату çинчен Ухтепи хăй хускатрĕ.

– Сентиер, эсĕ халиччен пĕр хĕре те пулин юратса курнă-и?

Сентиер ăна хирĕç нимĕн те калаймарĕ, аптрарĕ.

– Юратнă та пулĕ, уççăн калама пултараймастăп.

– Эпĕ сана юрататăп, Сентиер, анчах эсĕ мана киле ăсатса яратăн пулсан та туйăмсем çинчен пĕр сăмах та хускатмастăн. Ялан ĕç çинчен те концертсене хатĕрленесси çинчен калатăн. Эсĕ юрату çинчен калаçу пуçласса кĕтетĕп. Эсĕ манăн асăмран каймастăн, Сентиер.

Каччă вара хăй урăх хĕре юратни çинчен шарламарĕ. Унăн кăмăлланă хĕрĕ Шуçăмпи ятлă. Вăл – пулас ветеринар. Сентиер савниййĕ вĕренсе тухсан яла таврăнасса кĕтет. Иккĕшĕ те ялта ĕçлемелли çынсемçке. Анчах юлашки тĕлпулура юратнă хĕрĕ пит уçах пулмарĕ. Вĕсем ялхуçалăхĕ çинчен кăна калаçрĕç. Сентиер Ухтепие те мухтать, ăна хисеплет. Çапах та Шуçăмпие юратарах парать.

– Сентиер, эпĕ çук чухне эсĕ ман çинчен аса илетĕн-ши пĕрре те пулин? Манăн вара сана пĕрре те асăмран ярас килмест. Юрататăп эпĕ сана, Сентиер, – терĕ пĕрре Ухтепи.

– Мĕнле калас, Ухтепи, эпĕ сана юлташ тесе хисеплетĕп. Эсĕ лайăх çын. Санăн ĕçченлĕхӳ те, сăн илемĕ те пур. Сана темĕнле каччă та юратма пултарать.

– Мана нимĕнле каччă та кирлĕ мар, Сентиер, эсĕ пулсан. Эпĕ сансăр пуçне урăх никама та юратма пултараймастăп.

Сентиер хăйĕн юратнă хĕрĕ пурри çинчен çаплах шарламасть-ха. Ухтепи вара ăна ыталать те, уйрăлнă вăхăтра, çын курман чухне, питĕнчен чуп туса илет.

– Ухтепи, нивушлĕ эсĕ мана юрататăн?

– Эпĕ сана кăна хамăн упăшка тăвăттăм. Анчах эсĕ халех авланасси çинчен шухăшламастăн пулмалла.

– Ан кӳрен те, Ухтепи, сана эпĕ хисеплетĕп, эсĕ те ман чуна çывăх. Анчах манăн юратнă хĕр пур.

– Мĕншĕн вара эпĕ ун çинчен халиччен те пĕлмен? Шанас килмест. Эпир иксĕмĕр килĕштерсех çӳретпĕр-çке. Вăйăсенче те иксĕмĕр пĕрле юрлатпăр, ташлатпăр. Эсĕ мана хăвăн юлташу вырăнне хуратăн. Эпир юлташсем-çке.

– Эпĕ сана, Ухтепи, хамран сивĕнме ыйтмастăп. Çапах эпĕ ытларах ăна юрататăп. Вăл Шуçăмпи ятлă. Ун пек тӳрĕ каланăшăн йывăра ан ил. Тутлă ултавран чăнни аван, хăть йӳçĕ пултăр.

– Мĕн тăвам ĕнтĕ, Сентиер, чĕреме ăна ан юрат та çавна юрат тесе калаймастăн. Унăн хăйĕн саккунĕ. Сана кăна юратма хушать чĕрем, Сентиер.

– Туп, Ухтепи, хăвна юрăхлă каччă. Эпĕ чухлатăп, сана юратакансем те пур. Анчах эсĕ темшĕн вĕсем çине пăхмастăн.

– Эсĕ мана хăть те мĕн кала, Сентиер, эсĕ урăххине каччă илетĕн пулсан та эпĕ сана юратма пăрахас çук. Юрри те пур ун çинчен.

... Манас çук пирвайхи
юратăва,
Манас çук пирвайхи каççене.
Пирвайхи юрату аса килсен,
Ик куçăмран куççуль тăкăнать.

Ухтепи малалла юрлать:

... Сад пахчи, сад пахчи,
çырла пахчи,
Ун çырлине татман
çын пур-ши?
Ачаран выляса пĕрле ӳссе
Уйрălнă чух йĕмен
çын пур-ши?

Ун хыççăн Ухтепи:

– Сентиер, пар аллуна, – терĕ те кайма тăчĕ. Сентиер ăна чарчĕ.

– Ан кӳрен, Ухтепи, мĕн тăвам ĕнтĕ, сана та кăмăллатăп эпĕ. Анчах Шуçăмпие ытларах юрататăп.

– Пĕр вăхăтра икĕ хĕре юратма пулать-ши вара? – терĕ те Ухтепи Сентиер умĕнчен пăрахса кайрĕ.

«Мĕн тăвам ĕнтĕ? Ухтепие эпĕ çав тери хисеплетĕп. Вăл мана юратнине те туятăп. Анчах та пĕр енлĕ юрату çынна чăн-чăн телей кӳрейĕ-ши? Манăн ытларах Шуçăмпие хамăн арăм тăвас килет. Юлашкинчен тĕл пулсан вăл темĕнле манпа пит уçă пулмарĕ. Енчен те Шуçăмпи манпа сивĕрех пулсан Ухтепипех килĕшмелле пулĕ. Начар хĕр мар вăл», – шухăша кайрĕ Сентиер.

***

Кăçал колхозра ака ĕçĕсем вăхăтлă, лайăх пахалăхпа вĕçленчĕç. Микула прaçникĕ те çитет. Ĕçе тытăниччен малтан Сентиер колхоз хирĕнче ăçта мĕн акмаллине колхоз картти çине паллă туса хучĕ. План турĕ. Унпа колхоз председательне паллаштарчĕ. Унăн планне колхоз правленийĕн ларăвĕнче пăхса тухса çирĕплетрĕç. Халь ĕнтĕ акă çураки ĕçĕсем те вĕçленчĕç.

Çуллахи Микула кунĕ çамрăксем кашни çулхи пекех вăрман хĕрне пухăнчĕç. Йывăççем ешерсе çитнĕ. Сывлăш уçă. Кайăксем те çурхи илемпе киленсе хăйсен юррисене илемлĕн шăрантараççĕ. Акă ăçта вăл кĕрнеклĕ илемлĕ çут тĕнче! Лантăшсем те чечекре.

Тутимĕр те хăйĕн мăшăрĕпе вăрман хĕрне уçăлма килнĕ. Тутимĕр баянне тăсса ярсан çамрăксем ташлама тытăнчĕç.

Кăнтăрла иртсе каçа сулăнсан тин яла таврăнчĕç çамрăксем. Кĕçĕр вĕсен уяв пуçламалла. Вăрман хĕрринче юрласа-ташлани уява яла илсе килнĕ пек шутланать.

**/Вĕçĕ çитес номерте/.**

Анатолий КИБЕЧ

# Турхан капитан

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 44-45 номерсенче/.**

– Канаш витĕрех кайрăр-и вара? – пĕлес килчĕ ман.

– Аннепе ытти тăвансене куратăп пуль тесе хĕпĕртенĕччĕ. Ĕç тухмарĕ, Киров урлă ячĕç. Вăрçă пĕтсен те унтах хăварчĕç. Халĕ сержантсем хатĕрлекен шкулта ĕçлетĕп. Ну, юрĕ, хам çинчен каласа çитет ĕнтĕ. Хăв тата мĕнле ĕмĕтсемпе пурăнатăн?

Кăштах каласа патăм, анчах ытлашши пуплешес темерĕм, Яков Павловичран та именрĕм курăнать. Çав тери хĕнпе çăлăнса юлнă çын умĕнче хам пирки калаçни вырăнлах та мар пек туйăнчĕ. Ĕççе çинĕшĕн тӳлеме тăрсан мана чарчĕ, тăкаксене хăй çине илчĕ.

Кайран та чылай калаçрăмăр. Çар ĕçне чунтан парăннă Турхан капитан Читара анса юлчĕ, перрон çинче алă тытсах уйрăлтăмăр. Вăл мана çак тĕлпулу çинчен килне çитсе тăванĕсене пĕлтерме ыйтрĕ. Хаваспах килĕшрĕм.

## ВУЛАКАН ПУЛТАРУЛĂХĔ

Маргарита ПРОКОПЬЕВА

### Эп хам та чечек пекчĕ

Шăнкăрав пек сасси çăлкуçăн,
Чĕнет пире иртсе пыруçăн.
Тăп-тăрă шыв чуна лăпкатчĕ,
Ун витĕр çăлтăр курăнатчĕ,
Каçхи тĕнче сывлатчĕ уççăн.

Ĕç вĕçленсен кунта килеттĕм,
Асамлă кĕввине итлеттĕм,
Аманнă чĕрене сиплеттĕм.
Шывра ишетчĕ кĕмĕл уйăх,
Çут сывлăмпа çиçетчĕ улăх.

Çăлкуçăм, эп сана упраттăм,
Çурхи шыва уçса яраттăм,
Йĕри-тавра чечек лартаттăм.
Ун чух эп хам та чечек пекчĕ,
Çитсен çав вăхăт – тем пекехчĕ!

Çăлкуç – чĕр пурнăçăн пĕр пайĕ,
Ыр сăмахпа кашни пуç тайĕ.

### Тăван кил умĕнче

Çуралнă кил теейĕмĕн,
Пыраймăн ун патне.
Курма текех кĕреймĕн
Ытарайми садне.

– Эс мĕншĕн ютшăнатăн
Ӳстернĕ ачунтан?
Кунта эп ăшăнатăп,
Кĕртсемччĕ хапхунтан.

Тем пысăкăш çăра-мĕн...
Уçаймăп-ши ăна?
Кăмăлăма чараймăн,
Сиплесчĕ ман чуна.

Тăван урампа утăп,
Ыталăп йăмрана.
Хĕм сапрĕ хĕвел çуттăн
Чечеклĕ çарана.

Майамипе Панама
Ман чуншăн çывăх мар.
Мăн асаттен хунавĕ
Кунтан илет тымар.

**Тамара Лазакович 14 ҫулта спорт ҫӑлтӑрне ҫаврӑннӑ. 18-та вӑл Вӑйӑсенче ҫӗнтернӗ. Анчах та чапа чӑтайман. Гимнасткӑна сӑра-эрех пӗтернӗ.**

**1992 ҫулхи чӳк уйӑхӗн 1-мӗшӗнче Витебскра хӗрарӑм виллине тупнӑ. Ҫумӗнче документсем пулман. Кӗлетке ҫинчи тумтирӗ ҫӗтӗк-ҫурӑк, ҫумӗнче нимӗнле хаклӑ эреш те ҫук. Хӗрарӑм кам пулнине кӗҫех палӑртнӑ – спорт гимнастики енӗпе 1972 ҫулхи Олимпиада чемпионки Тамара Лазакович.**

**Вӑл Совет Союзӗнчи чи пиҫӗ гимнастка шутланнӑ, анчах та карьера вӗҫленнӗ хыҫҫӑн усал йӑлапа туслашнӑ. Ахаль пурнӑҫа хӑнӑхайман Лазакович.**



# Олимп тӳпинчен...

### Гимнастикӑна тӳрех ҫакланайман

Тамара Лазакович чухӑн ҫемьере ҫуралнӑ. Ҫавӑнпа та спорт гимнастики уншӑн шӑпа парни вырӑнӗнчех пулнӑ. 1973 ҫулхи Америкӑри ӑмӑртусенче чӗркуҫҫине ыраттарнӑ. Шӑпах ҫакна пула унӑн карьерӑпа сывпуллашма тивнӗ.

Тирпейлӳҫӗре ӗҫлекен амӑшӗ ҫемьене тӑрантарматумлантарма хӑтланнӑ-ха. Ашшӗ эрех-сӑрапа туслӑ пулнӑ. Гимнастикӑна Тамара тӳрех суйласа илмен. Ӑна спортӑн ҫак тӗсне шкулти физкультура учителӗ сӗннӗ. Хӗрачана малтанах нимӗнпе те килӗшмен вӑл. Анчах темиҫе уйӑхран Тамара хӑех тепӗр хут унпа аппаланса пӑхма тӗв тунӑ. Хӑй гимнастика тыткӑнне мӗнле ҫакланнине сиссе те юлайман хӗрача.

Тамарӑна ӑннӑ темелле. Ӑна тӳрех паллӑ нумай ҫӑлтӑра ӳстернӗ тренер Викентий Дмитриев асӑрханӑ. 1962 ҫулта тренер Лариса Петрикпа нумай вӑхӑт ирттернӗ – унӑн юратнӑ вӗренекенӗ пулнӑ вӑл. Шӑпах Петрик тренера ҫӗнӗ хӗрачана пӑхма сӗннӗ. Тамара ун чухне "Динамо" спорт шкулӗн секцине ҫӳренӗ. Дмитриев, шкулӑн ун чухнехи директорӗ тата акробатика тренерӗ Николай Бабкин Лазаковича хӑйсен хӳттине илнӗ.

Вӗсем Тамара пултарулӑхне асӑрхама пултарнӑ. Дмитриев каланӑ тӑрӑх, хӗрачан Турӑ пани пулнӑ. Хӗрачана тренерсем ашшӗ-амӑшӗнчен те лайӑхрах пӑхнӑ – килне ҫитиех ӑсатнӑ. Бабкин сӑмахӗсем тӑрӑх, Лазаковича ҫемьере тимлӗх ҫитеймӗн уйӑрманни тӳрех паллӑ пулнӑ, анчах та ҫав вӑхӑтрах хӗрача ӗҫченӗхне палӑрнӑ, тренерсен ӑна хӑвалама та тивмен. Ӗҫченлӗхсӗр пуҫне Лазаковичӑн чӑнласах пултарулӑх пулнӑ – ӑна ҫӗнӗ пӗр элемента та темиҫе хут кӑтартма тивмен. Вӑл тӳрех ярса илнӗ, автоматизм шайне ҫитериччен ӗҫленӗ.

### Латынинӑн "ҫукӗ"

Лазакович 13 ҫултах СССР чемпионатне хутшӑнса улттӑмӗш вырӑн ҫӗнсе илнӗ. Ун умӗнче Наталья Кучинская, Лариса Петрик, Зинаида Воронина, Полина Астахова тата Людмила Турищева кӑна пулнӑ. Чӑн та, турнир хыҫҫӑн Тамара хӑй кулянса ӳкнӗ. Вӑл ҫапах та ҫӳлерехри вырӑн пирки ӗмӗтленнӗ. Анчах та Викентий Дмитриев хӗрачана лӑплантарма пултарнӑ – ҫитӗнӳсем умра-ха.

Тамара Олимпиадӑна 14 ҫултах лекме пултарнӑ, анчах та хӗрачана Мехикона Лариса Латынина илме килӗшмен. Ун чухне вӑл хӗрарӑмсен пӗрлештернӗ командин тренерӗ пулнӑ. Ҫакӑ кавир айӗнчи вӑрҫӑпа та ҫыхӑнма пултарнӑ теҫҫӗ: Витебскран пӗр спортсменка – Лариса Петрик – ҫитет-мӗн. Тӗрӗссипе, СССР юниор чемпионачӗнче ҫӗнтернӗ хыҫҫӑн Тамара пӗрлештернӗ командӑн тренерӗсем йӗркеленӗ тӗрӗслев стартӗнче Алла Демьяненкопа Татьяна Китляровӑна выляса янӑ. Ҫапла 1968 ҫулхи Олимпиадӑна саппасрисен шутӗнче те хутшӑнайман.



Латынина каярахпа хӑйсен йышӑнӑвне Лазаковичӑн ҫӑлтӑр чирӗ пуҫланнипе ҫыхӑнтарса ӑнлантарнӑ. Олимпиада командине ҫавӑнпа лекеймен те спортсменка. Ҫакӑнпа ытти тренер та килӗшнӗ. Олимпиада вырӑнне Тамара "Новенькая" фильмра ӳкерӗннӗ. Тренер ролӗнче – Валентин Гафт. Чӑн та, ҫав фильм, унта нумай спортсмен тата Юрий Никулин хутшӑннӑ, куракан асӗнче нимӗнпе те юлман.

### Тӗнче шайӗнче

Мехикора ҫӗнтернӗ хыҫҫӑн Викентий Дмитриевпа Лариса Петрик сывпуллашнӑ – спортсменка Витебскран Мускава куҫнӑ. Тренер Тамара Лазаковичпа кӑна ӗҫлеме пуҫланӑ. Ҫапла майпа техникӑна вӗсем идеал шайне ҫитернӗ. 1970 ҫулта 16-ри гимнастка СССР чемпионачӗнче виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑннӑ. Пӗрене ҫинче хусканусене тӗрӗс пурнӑҫласа Тамара наци пӗрлештернӗ командинче ҫирӗп тымар янӑ.

"Пирӗн ҫемьере укҫа-тенкӗ енчен лару-тӑру питӗ йывӑрччӗ. Гимнастика вара лайӑх ӗҫлесе илме май паратчӗ. Пуҫламӑшӗнче эпӗ 40 тенкӗ стипенди илеттӗм. Унтан 20 тенкӗ хушса пачӗҫ. Каярахпа ӳссех пычӗ – 80, 120, 160, 180, 250. СССР пӗрлештернӗ командинче шалу 300 тенкӗпе танлашатчӗ. Уйрӑм ӑмӑртура ҫӗнтернӗшӗн 500 тенкӗ тӳлесе хавхалантаратчӗҫ. Пӗренесем ҫинчи хуcканусемшӗн пӗрремӗш вырӑн 330 тенкӗпе танлашатчӗ, кӗмӗл – 250, бронза – 180. Пысӑк ӑмӑртусенчен таврӑннӑ чухне, ҫӗнтерӳпе пулсан – пушшех те – пур пысӑк пуҫлӑх та вокзалта кӗтсе илетчӗ. Космонавтсем пек. Алӑ ҫинче ҫӗклеменни кӑна!" – каласа кӑтартнӑ Тамара Лазакович. Тренерӑн шалӑвӗ 120 тенкӗпе танлашнӑ. Ҫак вӑхӑтра



Лазаковичӑн ашшӗ Витебск варринче ыйткаласа тӑнӑ...

Ҫулталӑкран Тамара СССР халӑхӗсен спартакиадин абсолютлӑ чемпионки пулса тӑнӑ, Европа абсолютлӑ чемпионкин титулне Людмила Турищевӑпа пӗрле тивӗҫнӗ. Тата тепӗр ҫулталӑкран Мюнхенра иртнӗ Вӑйӑсенче харӑсах тӑватӑ медаль выляса илнӗ: командӑра – ылтӑн, пӗрене ҫинче – кӗмӗл, нумай енлӗ тата ирӗклӗ ӑмӑртусенче – икшер бронза. Тӗнчене Тамара хӑйӗн хускавӑвӗсен амплитудипе тата идеал шайӗнчи техникипе парӑнтарнӑ.

Ун чухне Франци кӑларӑмӗ L'Equipe Тамара Лазаковича Олимпиадӑна хутшӑннӑ чи илӗртӳллӗ те илемлӗ гимнасткӑпа танлаштарнӑ. "Унӑн йӑл кулли мӗне тӑрать, вӑл ҫӑмӑл хусканулӑ, пиҫӗ кӗлеткеллӗ – чӑн-чӑн артистка", – ҫырнӑ ун пирки журналистсем. Vogue журнал ӑна фотосессие хутшӑнма чӗннӗ. Мюнхенри ӑмӑртусемпе чаплӑ ҫӗнтерӳсем 18 ҫулти спортсменка карьерин вӗҫӗн пуҫламӑшӗ иккенне ун чухне никам та чухлама та пултарайман.

### Аялалла...

Олимпиадӑри ҫӗнтерӳшӗн Тамара Лазакович Витебск варринче икӗ пӳлӗмлӗ хваттер тата "Волга" машина тивӗҫнӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑнах хӗр ашшӗ-амӑшӗ пурӑнма пӑрахса унта куҫнӑ. Олимпиада чемпионки тренерсене пӗр вӑхӑт хӑйне лӑпкӑлӑхра хӑварма ыйтнӑ – Вӑйӑсем хыҫҫӑн унӑн спорт залӗнчен тата снарядсенчен ӑшӗ пӑтраннӑ.

1973 ҫулта СССР пӗрлештернӗ командин паллӑ ытти гимнасткипе пӗрле Лазакович Америкӑна тухса кайнӑ. Унта вӗсем шоу йӗркелесе хуларан хулана ҫӳренӗ. Вӗсенчен пӗринче Тамара ӳксе чӗркуҫҫине ыраттарнӑ. Хытах сурантанни киле таврӑнсан кӑна палӑрнӑ. "Операци хыҫҫӑн эпӗ пӗр вӑхӑт тухкаларӑм-ха спортзала, анчах ӑнлантӑм – манӑн вӑхӑт вӗҫленчӗ", – тенӗ ҫакӑн хыҫҫӑн Лазакович.

Ҫав ҫулах кӗркунне тренерсем ӑна командӑна кӗртмен. Карьера вӗҫленнӗ. Унтан пӗчӗккӗнех аялалла кусма пуҫланӑ.

Лазакович качча тухнӑ. Хӗрача ҫуратнӑ. Анчах ҫемье нумай тытӑнса тӑрайман. Упӑшки тӑван кӗтесне Молдавие тухса кайнӑ – вӑл арӑмӗ эрех-сӑрапа туслашнине чӑтайман. Усал ҫак йӑлана Тамара ҫамрӑк чухнех иленнӗ-мӗн. Анчах та Витебскри тренерсем усал сӑмах сарӑласран сыхлансах мӗн кирлине йӑлт пурнӑҫланӑ.

"Тамара суранран сипленнӗ чухне ӑмӑртусем пулмарӗҫ. Эпӗ ӑна облҫӑвкома спорт инструкторне вырнаҫма сӗнтӗм. Шӑпах ун валличчӗ ку – ӗҫ коллективӗсене ҫӳресе Олимпиада, спорт ҫинчен каласмаллаччӗ. Ҫамрӑксене спорта ытларах явӑҫтармаллаччӗ. Малтанах итлерӗ-ха вӑл мана. Каярахпа тӗлпулусене сайрарах та сайрарах ҫӳреме пуҫларӗ. Тамара вӑйлах ӗҫни пирки сас-хура сарӑлчӗ. Эпир Викентий Дмитриевпа ӑна пулӑшас тесе нумай тӑрӑшрӑмӑр, анчах та усси пулмарӗ", – каласа кӑтартнӑ Бабкин.

Лазакович хваттерне те, машинине те сутнӑ, хула айккинчи хӑлтӑр-халтӑр ҫуртра тӗпленнӗ. Унта пурӑнма та услови пулман. Ун ҫинчен тата аван мартарах сасхура сарӑлнӑ – хӗрарӑм ӗнтӗ эрехсӑрапа кӑна мар, наркотикпа та туслашнӑ. Ун валли вара укҫа-тенкӗ сахал мар кирлӗ. Вӑл вӑрӑпа та ҫаклаттарнине калаҫҫӗ. Проституципе те аппаланнӑ-мӗн. Ҫакна ҫирӗплетекен фактсем ҫапах та ҫук. Анчах ҫакӑ паллӑ: ахаль пурнӑҫра, тренировкӑсемсӗр, спортри тӗллевсемсӗр – Олимпиада чемпионки пурнӑҫри вырӑнне ҫухатнӑ.

Вӑйӑсенче ҫӗнтернӗренпе 20 ҫул иртсен Тамара Лазаковичӑн виллӗ ӳтне тупнӑ. Тата 24 ҫултан кӑна унӑн вилтӑприне йӗркене кӗртнӗ – чемпионкӑна ашшӗпе юнашар пытарнӑ. Вилтӑприне шӑпах Тамара хӑйӗн чаплӑ, анчах та питӗ кӗске карьерине пуҫланӑ спорт шкулӗн ӗҫченӗсем тирпейленӗ – хӑйсен укҫи-тенкипе. Маларах вара унта пачах та ҫӳп-ҫап купи ӳссе ларнӑ-мӗн. Ӑна Витебскри колледж физкультура учителӗ Василий Ильницкий хӑйӗн вӗренекенӗсемпе пӗрле тасатнӑ.

Тамара Лазакович ячӗ иртнӗлӗхе ӑсаннӑ. Спорта юратакансен асӗнче вӑл гимнастика ҫӑлтӑрӗ пек юлнӑ. Тамара Лазакович ячӗпе халӗ Витебскра ҫулсерен ятарлӑ турнир иртет.

**/"Чемпионат"/.**

# Ашшӗ вилсен икӗ ҫултан... ывӑлӗ ҫуралнӑ

**Екатеринбургра пурӑнакан Екатерина Захаровӑн мӑнукӗ ывӑлӗ вилнӗ хыҫҫӑн икӗ ҫултан ҫуралнӑ.**

Арҫын онкочиртен Тель-Авивра сипленнӗ чухне ар шӗвекне донор банкне парса хӑварма ӗлкӗрнӗ – ҫапла тумасассӑн Израильте ку чиртен сиплемеҫҫӗ. Шел, арҫынна ҫӑлса хӑварайман.

Ар шӗвекне чикӗ урлӑ илсе каҫни – детектив сюжечӗнчен те хӑватлӑрах. Екатерина Романовна ӑна Раҫҫее илсе каймашкӑн ирӗк аран-аран ыйтса илнӗ. "Халӗ те аса илме хӑратӑп, – каласа кӑтартнӑ каярахпа хӗрарӑм. – Ҫын кӗлеткин пайӗпех танлашать-ҫке ку. Саккун тӑрӑх, ҫакна арӑмӗ кӑна пурнӑҫлама пултарать. Анчах ывӑлӑм официаллӑ майпа авланманччӗ. Амӑшӗ вара никам та шутланмасть..."

Тӗллевне пурнӑҫлас тесе хӗрарӑм Израилӗн Мускаври посольствинчен пуҫласа Тель-Авиври ют ҫӗршывсен ӗҫӗн министерстви таранах ҫитнӗ. Илсе тухмашкӑн ирӗк илнӗ. Анчах та аэропортра таможня ӗҫченӗсем тытса чарнӑ, шӑнтса хунӑ клеткӑсемлӗ савӑта уҫса кӑтартма ыйтнӑ. Ҫапла туни пӗтӗм ӗҫе харама яни пулӗччӗ – савӑта уҫма юрамасть. Хӑй хими е биологи хӗҫ-пӑшалне илсе тухманнине макӑра-макӑра аран ӗнентернӗ хӗрарӑм.

Шӑнтса хунӑ ар шӗвекне суррогат-амӑшӗн варне Екатеринбург ӑсчах тухтӑрӗсем куҫарнӑ. Ӗҫӗ кӑткӑслӑхпа мар, кӑсӑклӑхпа палӑрнӑ – ҫынни тахҫанах ҫук, ачи вара тӑхӑр уйӑхран ҫуралать.

Мӑнукӗ чиперех ҫуралнине Екатерина Романовнӑна телефонпа шӑнкӑравласа пӗлтернӗ. Ача сассине илтсен хӗрарӑм, ытла хытӑ пӑлханнипе, тӑн ҫухатнӑ.

Хӗрарӑма мӑнукне усрава илме ирӗк панӑ. Европӑри хӑш-пӗр ҫӗршывра вара вилнӗ ҫынран ача ҫуратма чараҫҫӗ. Раҫҫейре кун тӗлӗшпе саккун ҫук.

Асламӑшӗ каланӑ тӑрӑх, Гоша – каснӑлартнӑ ашшӗ. Ҫывӑх ҫыннин сӑнӳкерчӗкне ачан кравачӗ ҫумнех вырнаҫтарнӑ. Гоша пӑртак ӳссен асламӑшӗ ӑна хӑй мӗнле майпа ҫут тӗнчене килнине каласа кӑтартӗ. Аист та, купӑста та айӑплӑ мар. Техника прогресӗ тата асамлӑха ӗненни кӑна...

**/«АиФ»/.**

Çĕрле. Пылчăк. Тĕтре. Арçын КамАЗ рулĕ умĕнче пырать... Курах каять – çул айккинче "Запорожец" лакса ларнă. Пылчăкран тухаймасăр пĕр вырăнта пĕтĕм вăйран мекĕрленет. "Пулăшас пулать", – шухăшлать арçын. Кабинăран тухса хайхи машина патне пырать, алăкне уçать:

– Пулăшмалла мар-и?

"Запорожец" водителĕ ун çине пăхать те... тăн çухатса кайса ӳкет. Мĕн тумалла? Хайхискерне хăвăртрах больницăна илсе çитереççĕ. Пĕр вăхăтран тăна кĕрет хайхи.

– Мĕн пулчĕ вара сана? – ыйтать КамаАЗ водителĕ. – Эпĕ сана пулăшас тенĕччĕ...

– Ара, хăвах шухăшласа пăх: çурçĕр, тăман... Эпĕ сехетре 120 километр хăвăртлăхпа пыратăп. Çак вăхăтра эсĕ алăка уçса пăхатăн...

* * *

Тул çутăлать. Ирхине çывхарса килет. Будильник çине пăхса çакна ăнланатăп – кĕçех кăшкăрма пуçлать, йĕксĕк!

* * *

Çын шăммине кăшласа лариччен шухăшласа пăхăр – хăвăрăн тасарах-им?

* * *

Ачапа задача шутлатпăр. Пĕрремĕш кун 5 стакан çырла çинĕ. Иккĕмĕш кун – 2 стакан сахалрах. Виççĕмĕш кун – пĕрремĕш тата иккĕмĕш кунхине пĕрлештернĕ чухлĕ. Пурĕ мĕн чухлĕ çырла çинĕ?

Çамкине картлантара-картлантара шутлать хайхи. Сăмси айĕн темĕн мăкăртатать.

– Йăлтах пĕр харăс çисе яма юраман-и мĕн? Мĕн тесе виçĕ куна тăснă? – илтетĕп унран.

* * *

Сунарçă тайгана пуçтарăннă. Вăрмана пĕлменнипе вырăнти çынна пĕрле илнĕ – çул кăтартмашкăн. Хайхисем вăрманпа пыраççĕ. Малта – вырăнти çын. Сунарçă пăшалне çĕклесе – ун хыççăн. Кĕтмен çĕртен вĕсене хирĕç чĕтлăхран упа тухать. Вырăнти çын ăна курсан юпа пек хытса тăрать. Чĕрчун та хускалмасть.

– Кил кунта... – пăшăлтатса чĕнет сунарçа вырăнти çын.

Хыçалта сасă паракан çук.

– Кунта кил тетĕп... – татах пăшăлтатать малти.

Каллех тавралăхра шăплăх кăна хуçаланать.

– Миçе каламалла сана – хăвăртрах кил тетĕп!.. – чашкăрмах пуçлать малти.

– Мĕн тума чĕнетĕн эсĕ ăна хăвăн патна? – тата шăппăнрах илтĕнсе каять хыçалта.

* * *

Маршрутка водителĕ ăнсăртран "Формула 1" çулĕ çине тухса кайнă. Паллах, ăна хăваласа çитекен никам та пулман. Унсăр пуçне вăл çула май чарăнса икĕ пассажира лартма та ĕлкĕрнĕ.

* * *

Пирĕн патра пурăнма хавaслă, анчах та нерв тытăмĕшĕн – сиенлĕ. Çавăнпа эпир хавaслă та, усал та.

* * *

Ирхине мухмăрла вăранса кайрăм. Кĕсьере 1000 тенкĕ тупсан питĕ савăнтăм. Каярахпа тепĕр кĕсьере ĕнер банкоматра 15000 тенкĕ илнине çирĕплетекен квитанцие куриччен...

* * *

Пĕр кӳршĕ – теприне:

– Эх, мĕншĕн ĕнене жирафпа пĕтĕçтерме май çук-ши?

– Мĕн тума кирлĕ сана ку?

– Сĕтне килте парĕччĕ, апатне карта урлă кӳршĕ патĕнче çийĕччĕ...

* * *

Пуйăс вакунĕнче арçын кăшкăрса чупать:

– Хĕрарăм тăн çухатса кайса ӳкрĕ! Камăн та пулин коньяк пур-и?!

Хайхискерне хăвăртах коньяк тупса параççĕ. Арçын кĕленчене уçать те анинченех лăнкăртаттарса ĕçме пуçлать.

– Эй, эс мĕскер?! – кăшкăрса чарма хăтланаççĕ ăна.

– Сирĕн нерв тытăмĕ хурçăран пулĕ те, анчах та тăн çухатса кайса ӳкнĕ хĕрарăма курсан хама яланах япăх туятăп эпĕ, – ăнлантарать арçын.

* * *

Дачăра. Упăшки:

– Çурт тăррине юсарăм, пахчари çĕре чаврăм, çăла тасатрăм, çула хăйăр сартăм...

Арăмĕ:

– Тăхта-ха... "Виагра" витĕмĕ урăхларах пулмалла пек туйăнать-çке...

* * *

– Эсир мĕнле çывăрса каятăр? – ыйтать тухтăр чирлинчен.

– Питĕ ансат. Виççĕ таран шутлатăп та...

– Мĕнле? Виççĕччен кăна-и?

– Ну, тепĕр чухне тăваттă та çитсе каять.

* * *

Хĕрарăм упăшки патне шăнкăравлать:

– Машина карбюратора шыв лекрĕ-ши – тапранмасть.

– Уй, мĕнле ăсланса кайнă эсĕ! Карбюратор ăçта вырнаçнине пĕлетĕн-и хăть?

– Пĕлетĕп – машинăра.

– Машина вара ăçта?

– Кӳлĕре...




## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

АУ «Издательский дом «Хыпар»
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
НА 3, 6-7 ЭТАЖАХ
Дома печати. Справки по телефонам: 28-83-64, 28-83-70, 56-04-17.

**Уважаемые жители республики!**
**АО «Чурачикский завод ЖБИ»**
**предлагает ВАМ все виды железобетонных изделий необходимых в хозяйстве:**

**тротуарные плиты:** ПТП 60х80, ПП 50х100, П 21х1.5;
**колодезные кольца** диаметром КС-7-9, КС 10-2;
**кольца для канализации** КС 15-2;
**крышки на кольца** ПП 10-1-2Б, ПП 15-1-2Б;
**перемычки, столбы оград** 2ПБ16, 2ПБ19, 2ПБ 22, 2ПБ 25;
**треугольные столбы** ПС-3;
**фундаментные блоки** ФБС-3, ФБС-4, ФБС-5, ФБС-6.

Имеем возможность предоставить автотранспорт в любую точку страны по разумным ценам.

**Наш адрес:** Цивильский район, с.Чурачики, ул.Мелиораторов, 28.
**Телефоны:** 8 /835-45/ 60-0-93, 60-2-24, 60-0-66, 8-937-377-00-96.

**Действует гибкая система скидок!**
***Все для Вас! Торопитесь приобрести! Не опоздайте!***

### ПУЛĂШУ/УСЛУГИ

**38.Чистка колодцев, скважин.** Водоснабжение. Т. 89674715070.

**43.Бурение скважин** «под ключ». Гарантия. **Т. 8-927-668-43-82.**

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 8(8352) 215345, 89199785855.
*Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение колодцев. Кольца колодезные** замковые, качественные. Доставка. Скидки. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**53.Изготовление ЛЕСТНИЦЫ** /дуб, хвоя, береза/. Т. 89176623494.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

### СУТАТĂП/ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 32 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Песок, ОПГС; **КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и к-заций 0,7; 1; 1,5 м. Бурение. Высокое качество. Доставка манипулятором. Без выходных. Т. 8-967-470-46-77.

**4.Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.БЛОКИ керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40, **полнотелые** 20х20х40. Доставка. Разгрузка. Т. 8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**14.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**15.Кирпич** любой. Т. 8-961-339-33-63.

**16.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит – недорого. Т. 8-905-346-56-71.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 8-917-675-75-28.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, колодезные **кольца.** Т. 8-903-346-85-56.

**27.КИРПИЧ** от 10 руб., **БЛОКИ к/б,** пеноблоки. Манипулятор. Тел. 89033220208, 48-02-08.

**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ. Бесплатно:** замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. Т. 8-937-391-39-91.

**76.Срубы** с комплектацией, липовые срубы, **каркасные дома** – на заказ. **Д-ка.** Т. 89379528467.

**142.Окна – дёшево.** Т. 8-927-668-43-82.

**273.ПЕСОК, гравмассу, ДОСКИ, брус.** Д-ка. Дешево. Т. 8-960-306-32-54.

**750.БЫЧКОВ.** Д-ка. Т. 8-927-984-15-15.

### ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Тел. 8-962-599-47-06.

**39.Бычков, коров, лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**612.Закупаем ПОРОСЯТ** – 5-20 кг. Т. 8-967-791-89-05.

**694.Бычков, коров, тёлок, лошадей** – дорого. Т. 8-961-344-03-82.


# Сăмах каçмăш



**Н.Краснов Йĕпреç районĕ/ хатĕрленĕ**

**СЫЛТĂМАЛЛА:** 1. Республикăри хула. 5. Аквариумри пулă. 9. Пушă ещĕк. 10. Тĕнчери çынсен уйрăмлăхĕ. 12. Йывăç. 13. Чӳрече пайĕ. 14. Алма-... . 15. Атăл юппи. 16. Тĕнчери Олимпиада комитечĕ /кĕскен/. 17. Унран шуйттан хăрать. 19. Ĕç укçин пĕр пайĕ. 20. Çурçĕр Америкăри йывăç. 23. Икĕ вĕçлĕ япала. 26. Тăхăнмалли япала. 27. Лайăх /синоним/. 28. Пĕчĕк чухнехи Ираида. 29. Вăтам Азири эрех. 30. Чăваш писателĕ. 32. Европăпа Ази чикки. 33. А.Райкинăн ăслă студенчĕ. 34. Юри, ячĕшĕн, ... 35. Сайгак евĕр чĕрчун.

**АЯЛАЛЛА**: 1. Наян. 2. Ока юппи. 3. Пысăк попугай. 4. Çурçĕрти вĕрӳçĕ. 5. Страус евĕр кайăк. 6. Тĕвесен ушкăнĕ. 7. ... кĕперĕ. 8. Кавказри юханшыв. 9. Пит пайĕ. 11. Авалхи Египет Турри. 15. Лакăшти инке шыв хĕррине анать /туп. юм./. 18. Авалхи Грузи хĕрарăм патши. 20. Тапăну. 21. Йогсен тренерĕ. 22. Чекпа укça илмелли меслет. 23. Шакла кавир. 24. Авалхи грексен вăрçă Турри. 25. Ăна пӳрт йĕри-тавра тытаççĕ. 28. Тӳперен çунса ӳкнĕ вĕçевçĕ. 31. ... Мария.


« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор-тĕп редактор М.М.АРЛАНОВ

Редактор – М.М.ИЛЬИНА
Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

Çырăнмалли индекс: 11515

4 627126 799869



**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07
**Электрон почти:** hypar@mail.ru



Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи» рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 25.11.2016 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
64-24-01 – издательство директорĕ.
Тираж 7017. Заказ 4188.